ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Март
4
ЮНКУН
№ 44 (8953)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте!

КПСС ЧĂВАШ ОБКОМĔНЧЕ: Чкаловски районĕнчи колхозниксем, колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене 1953 çулта пĕтĕм ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçлă туса илессишĕн тата общественнăллă продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе калани çинчен (1 стр.).

Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене чĕнсе калани (1—2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: **М. Зайцев.**—Коммунистсене политика тĕлĕшĕнчен сыхă пулма воспитани памалла (2 стр.).

РАЙОНТИ ХАÇАТСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ: «Вăйлă тырпулшăн» хаçатăн пĕр номерĕ (2 стр.).

НОВАТОРСЕН ОПЫТНЕ АНЛА САРАР! **Г. Долгов.**—Çĕнĕ меслетсем шыраса. **К. Серебряков.** — Поездсене расписани тăрăх илсе çӳретпĕр (3 стр.).

Хамăр республика тăрăх (3 стр.).

И. Высоков.—Китайри аслă канал (3 стр.).

Вырăс çарĕсем Болгарие Турци пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăранпа 75 çул тултарнă (4 стр.).

Ялхуçалăх ĕçченĕсен пысăк та чыслă тивĕçĕ

Паян пирĕн хаçат Чкаловски районĕнчи колхозниксем, колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене чĕнсе каланине пичетлет.

КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем 1953 çулта пĕтĕм ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçлă туса илессишĕн тата общественнăллă продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каланине ырларĕ. Обком бюровĕ КПСС райкомĕсене, партин пуçламăш организацийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çитес кунсенче колхозниксен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен пухăвĕсене ирттерме хушрĕ. Çак пухусенче 1952 çулта И. В. Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене мĕнле пурнăçланине пăхса тухмалла тата, Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен примерĕпе, 1953 çулта тырпул тухăçлăхне ӳстерме, общественнăллă вылăх-чĕрлĕх хисепне нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне ӳстерме конкретлă ĕçсем палăртмалла.

Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен пуçарăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Ку пуçарăвăн тĕп тĕллевĕ—социализмлă ялхуçалăхĕ умне партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама колхоз хресченĕсен мĕнпур вăй-хăватне тата ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм резервсене мобилизацилесси пулать. Кашни колхозникпа механизатор тата ялхуçалăх специалисчĕ иртнĕ çулта пулнă çитменлĕхсемпе йăнăшсене, вĕсене пĕтермелли майсене тата кăçал тырпул тухăçлăхне, вылăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне мĕн чухлĕ ӳстермеллине, камăн хăш ĕçре тата мĕн чухлĕ ĕç тумаллине уççăн пĕлсе тăма тивĕç.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче республикăри колхозсем тунă çитĕнӳсем пĕчĕк мар. Вĕсене эпир Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен сырăвĕнчен те аван куратпăр. Анчах общественнăллă хуçалăха пуренчен те аталантарса пыма шалти резервсемпе тата мĕнпур майсемпе усă курнă пулсан, пирĕн республика ялхуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Чылай колхозсенче малта пыракан колхозсен опытне тата наука çитĕнĕвĕсене колхоз производствине çителĕксĕр кĕртсе пынă пирки тырпул тухăçлăхĕпе вылăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш пысăк мар. Уйрăм колхозсем ĕç вăйĕн ресурсĕсемпе начар усă кураççĕ, ĕç дисциплинине кирлĕ пек çирĕплетмеççĕ. Суха-ака ĕçĕнче агротехникăна пăснисене халĕ те пĕтермен-ха. МТС-сен техникипе тата колхозсенчи мĕнпур машинăсемпе тухăçлă ĕçлемен пирки ака-суха тăвасси, тырпула пухса кĕртесси вăраха тăсăлать, çавна пула тăкаксем нумай пулаççĕ.

Нумай колхозсем общественнăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çаплах тимсĕр пăхаççĕ. Вылăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемен тата çурт-йĕрсем начар пулнă пирки нумай колхозсем кашни çулах общественнăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк сиен кураççĕ. Вылăх-чĕрлĕх фермисем чылайăшĕ колхоза пысăк тупăш паракан хуçалăхсем пулса тăман-ха.

Республика ялхуçалăхĕнче техникăллă культурăсем, пахча çимĕç, нумай çул ӳсекен курăксем, вылăх апачĕ валли кирлĕ ытти культурăсем акса тăвас ĕçе наука тата малта пыракансен опычĕ кăтартса панă никĕс çинче туса пымаççĕ. Сад-пахча, пулă ĕрчетес тата ытти отраслĕсене аталантарас ĕç юлса пырать.

Тырпул тухăçлăхне ӳстересси, вылăх-чĕрлĕх йышне ӳстерсе пынă вăхăтрах, унăн тухăçлăхне ӳстерсе пырасси малашне те тĕп задача пулса тăрать. Партин XIX-мĕш съезчĕ çак задачăна пурнăçламалли çул-йĕре кăтартса пачĕ. Пуринчен малтан уй-хир ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатмалла, хирти ĕçсене тумалли срокĕсене кĕскетмелле. Çавăнпа та тракторсемпе тата ялхуçалăх машинисемпе кирек хăш ĕçре те тухăçлă усă курни кирлĕ. Çĕрĕçĕнчи тĕп ĕçсене пĕтĕмпех механизацилесе çитересси çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Пур колхозсенче те нумай çул ӳсекен курăксем акса йĕркеленĕ пусă çаврăнăшĕсене хăвăртрах туса çитермелле, вăрлăх туса илес ĕçе лайăхлатмалла, ака-суха ĕçне тĕрĕс йĕркелемелле, удобренисем ытларах хатĕрлесе вĕсемпе пĕлсе усă курмалла.

Вылăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хумасăр общественнăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантарасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Колхоз пусă çаврăнăшĕнче вылăх апачĕ тумалли культурăсем пысăк вырăнта пулмалла. Вылăх-чĕрлĕх валли лайăх витесем тăвас ĕçе кая хăварнине текех чăтса тăма юрамасть. Пысăк тухăçлă, нумай тавар тата тупăш паракан вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тесен, вылăхсене пăхас ĕçе анлăн механизацилемелле, вылăхсен ăратлăхне лайăхлатмалла.

Ялхуçалăхĕ енĕпе тăракан ответлă задачăсене пурнăçлама колхоз хресченĕсене коммунистсен партийĕпе Совет правительстви куллен пулăшса пыраççĕ. Пирĕн республикăна кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, правительство тракторсем, комбайнсем, молотилкăсем тата ытти çĕнĕ йышши машинăсем нумай панă.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялхуçалăхĕнчи ĕçченсен çитĕнĕвĕсене питĕ пысăка хурса хисеплет. Тырпул тухăçлăхне, вылăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстернĕшĕн, артель хуçалăхĕн ытти отраслĕсенче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн колхозниксене, механизаторсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, ертсе пыракан работниксене Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне параççĕ, ССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе награждалаççĕ.

Ялхуçалăх ĕçченĕсен нимрен те хаклăрах тивĕçĕ вăл—çĕрĕçĕпе вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе наука тата малта пыракансен опычĕ кăтартса панă никĕс çинче туса пырса, Тăван çĕршыв валли ытлăн-çитлĕн тырпул, пахча çимĕç, ашкакай, сĕт-çу, промышленность валли ытлăн-çитлĕн чĕртавар туса парасси пулать. Ялхуçалăх енĕпе кăçал палăртнă плансене—сталинла пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕн планĕсене ăнăçлă тултарни тата ирттерсе тултарни Совет государствин вăй-хăватне ӳстерес, хамăр çĕршывра коммунизм тăвас ĕçре пысăк çĕнтерӳ тунине пĕлтерет.

Çитес çуракинче ака-суха ĕçĕсене хăвăрт тата лайăх ирттерсе вăйлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывмалла. Çуракине тĕплĕн хатĕрленесси—паянхи чи пысăк задача. Ку тĕлĕшпе пирĕн ĕçсем халлĕхе чаплах мар-ха. Уйрăмах тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене юсасси кая юлса пырать. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Чурачăк, МТС-ĕсем тракторсем юсамалли плана çуррине те тултарман. Колхозсенчи ялхуçалăх машинисене, инвентаре тата ут таврашĕсене юсасси татах та начартарах. Чылай МТС-сенче пĕлтĕрхи йăнăшсене кăçал та тăваççĕ: тракторсене пахалăх тĕлĕшĕнчен мĕнле юсанине тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех мастерскойран кăлараççĕ.

Нумай колхозсем, вăрман турттармалли плана вăраха тăсса, çураки умĕн лашасене кантарса тăратмалли вăхăта кĕскетсе ячĕç. Ĕçе тĕрĕс йĕркелемен пирки хĕллехи агротехникăллă ĕçсене япăх пурнăçлаççĕ. Чылай колхозсен вăрлăх пахалăхĕ начар, анчах вăрлăха тасатса сортлас, ахаль вăрлăхсене сортлă вăрлăхпа улăштарас ĕçсем çаплах тăсăлса пыраççĕ. Минераллă удобренисем кӳрсе килмелли, вырăнти удобренисем хатĕрлемелли плана тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрать.

КПСС обкомĕн бюровĕ парти райкомĕсене колхозниксен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен социализмлă ăмăртăвне оперативлă ертсе пыма хушрĕ. Парти организацийĕсем çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме, çурхи ака-суха ĕçĕсене хăвăрт тата лайăх ирттерме колхозниксемпе механизаторсен производствăллă хастарлăхне пĕрмай ӳстерсе пыма тивĕç. Колхозсемпе МТС-сенчи кашни пуçламăш парторганизаци çуракине лайăх хатĕрленмелле тата ăна ăнăçлă ирттермелле тăвас тесе, партиллĕ политикăллă ĕçпе организациллĕ ĕçе тĕрĕс йĕркелеме тăрăшмалла. Колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсен производствăри авангардлă ролĕпе политикăллă активлăхне ӳстерес пулать. Вĕсем массăсен социализмлă ăмăртăвне хавхалантарса пыракан организаторсем пулса тăччăр.

Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен чĕнĕвне республикăри колхозниксем, механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем пĕтĕм кăмăлтан ырлĕç. 1953 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, общественнăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн саралакан социализмлă ăмăртăва республикăри мĕнпур колхоз хресченĕсене явăçтарăр!

◆

Çĕнĕ стройкăсем валли

ЛЕНИНГРАД. Çак кунсенче «Севкабель» завод Мускава 12.000 метр кабель ярса панă. Çав кабеле столицăри çӳлĕ çуртсем валли туса хатĕрленĕ. Заказа срокчен 10 кун малтан пурнăçланă.

Заводри конструкторсем, производствăра малта пыракансемпе пĕрле ĕçлесе, коммунизмăн аслă стройкисем валли ятарласа кабель тума хатĕрленме тытăннă.

(ТАСС).

КПСС Чăваш обкомĕнче

Чкаловски районĕнчи колхозниксем, колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене 1953 çулта пĕтĕм ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçлă туса илессишĕн тата общественнăллă продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе калани çинчен

КППС Чăваш обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

Чкаловски районĕнчи колхозниксем, колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене 1953 çулта пĕтĕм ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçлă туса илессишĕн тата общественнăллă продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каланине ырлас.

КПСС райкомĕсене, партин пуçламăш организацийĕсене, райсоветсен исполкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас: колхозниксен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен пухăвĕсенче 1952 çулта Сталин юлташ умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçланин итогĕсене тĕплĕн сӳтсе явмалла тата, Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен примерĕ тăрăх, 1953 çулта кашни колхоз, МТС-па совхоз тата район тăрăх пĕтĕм ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме, общественнăллă вылăх-чĕрлĕхĕн йышне малалла нумайлатнипе пĕр вăхăтрах унăн тухăçлăхне ӳстерме конкретлă обязательствăсем йышăнмалла.

КПСС райкомĕсене колхозниксен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен социализмлă ăмăртăвне оперативлă ертсе пыма, социализмлă ăмăрту договорĕсене пурнăçланине тăтăшах хире-хирĕç тĕрĕслессине организацилеме, социализмлă ăмăртăва сарас ĕçре колхозсенчи, МТС-сенчи тата совхозсенчи пуçламăш парторганизацисене куллен пулăшса пыма хушас.

Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçĕпе тата съездăн юлашки ларăвĕнче çулпуçсăмăр каланă сăмахпа хавхаланса, коммунизмла общество строительствинчи аслă задачăсене татса парас тĕлĕшпе пысăк хастарлăхпа ĕçлет.

Миллионшар колхозниксем, колхозницăсем, МТС-сен механизаторĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем ялхуçалăхĕ енĕпе умра тăракан тĕп задачăна—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес, общественнăллă вылăх-чĕрлĕх йышне малалла нумайлатнипе пĕр вăхăтрах унăн тухăçлăхне ӳстерес задачăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеççĕ.

Пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕ Коммунистсен партийĕ, Совет правительстви, Сталин юлташ хăй куллен тăрăшнипе тата пысăк пулăшу панипе ӳсĕм çулĕпе малалла аталанса пырать. 1952 çулта тĕштырăсен пĕтĕм тухăçлăхĕ 8 миллиард пăт пулнă. Техникăллă культурăсем, пахча çимĕç, вылăх апачĕ валли акнă культурăсем нумайрах пухса кĕртнĕ, общественнăллă вылăх-чĕрлĕхĕн хисепĕ тата унăн тухăçлăхĕ чылай ӳснĕ. Колхозсем çирĕпрех пулса тăчĕç тата колхозниксем пуянрах пурăнма пуçларĕç.

Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, иртнĕ 1952 çулта Чкаловски районĕнчи колхозниксем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем начар мар тырпул пăхса ӳстерчĕç, общественнăллă вылăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерчĕç, çавна май колхозсем организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен ытларах тĕреклĕнчĕç. Районти колхозсем тырпул хатĕрлес тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокчен пурнăçларĕç, хăйсем валли çурхи тĕштырă культурисен вăрлăхне кирлĕ чухлĕ хатĕрлерĕç.

Уйрăм колхозсем, бригадăсем тата вылăх-чĕрлĕх фермисем пысăк çитĕнӳсем турĕç. «Гвардеец» колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 20,5-шер центнер тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсем пухса кĕртрĕ. Н. Платонов ертсе пыракан уй-хир бригади тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсене вăтам шутпа кашни гектартан 22,3-шер центнер, çурхи тулă—25,5-шер центнер, пăрçа 22-шер центнер пухса кĕртнĕ. «Первомайск» колхозри Н. Сергеев бригади кашни гектартан 17-шер центнер вир, 433-шер центнер вылăх кăшманĕ туса илнĕ.

«Гвардеец» колхозри П. Заплаткинăпа М. Плешкова дояркăсем хăйсене çирĕплетсе панă вуншар ĕнерен кашнинчен 1.950 литр ытла сĕт суса илнĕ. «Восток» колхозри Ф. Николаева хăйне çирĕплетсе панă 7 сысна аминчен кашнинчен вăтам шутпа 21,3-шер çура илнĕ. «Гвардеец» колхозри сурăх ферми заведующийĕ М. Платонов çитĕннĕ 205 сурăхран вăтам шутпа кашнинчен 3,1-шер килограмм çăм касса илнĕ, кашни 100 сурăх пуçне 126,3 пӳтек пăхса ӳстернĕ.

Иртнĕ çулта МТС механизаторĕсем тăрăшса ĕçлерĕç, тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 106,8 процент тултарчĕç. «Гвардеец» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлесе, А. Михайлов ертсе пыракан трактор бригади çулталăкри плана 162,5 процент тултарнă, горючи 10 процент, машинăсене юсама панă укçаран 6.750 тенкĕ перекетленĕ, тракторпа тунă ĕçсен хăйне ларакан хакне кашни гектар пуçне 1 тенкĕ те 20 пус йӳнетнĕ тата ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме çирĕплетсе панă плана ирттерсе тултарнă. Тракторист А. Тэрговцев тракторпа тумалли ĕçсен сезонти планне 223 процент, машиновед А. Кириллов авăн çапмалли плана 266 процент, комбайнер З. Сармаев комбайнпа тырă вырмалли плана 152 процент тултарнă.

Иртнĕ çулти паха ĕçсене пăхса тухнă май, эпир хамăр ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен те манмастпăр. Пирĕн чылай колхозсем общественнăллă хуçалăха хăвăрт тата пур енĕпе те аталантарса пыма шалти резервсемпе тата мĕнпур майсемпе пĕтĕмпех усă курмаççĕ-ха. Малта пыракан колхозсен опытне çителĕксĕр сараççĕ, çав опыта ĕçе кĕртсе пымаççĕ. Чылай ялхуçалăх артелĕсенче ĕç вăйĕн ресурсĕсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ, ĕç дисциплини çирĕп мар, çĕрĕçпе вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç культурине ӳстерессишĕн çителĕксĕр тăрăшаççĕ, техникăллă культурăсем акмалли лаптăка пысăклатмаççĕ, общественнăллă çурт-йĕрсем тăвас тата артель хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсене аталантарас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Эпир халĕ те МТС техникипе çителĕксĕр усă куратпăр, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене, уйрăмах вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе йывăр ĕçсене механизацилесси начар пулса пырать.

Эпир çакна асра тытатпăр: 1953 çулта—сталинла пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнче—ялхуçалăх работникĕсем умĕнче, мĕнпур совет çыннисем умĕнчи пекех, çĕнĕ, пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Пирĕн хамăр ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн, пирĕн партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă тĕп задачăна татса парассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлемелле.

Эпир, Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем, партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсене сӳтсе явса тата хамăрăн мĕнпур майсене шута илсе, 1953 çулта ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пурне те ăнăçлă ирттерес тесе, социализмлă ăмăртăва анлă сарса яма йышăнтăмăр тата хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Пирĕн районăн 1953 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнертан кая мар тĕштырă пухса кĕртмелле, вăл шутра ыраш—18 центнертан кая мар, çурхи тулă—16 центнер, кантăр вăрри—5 центнер, сӳс—5 центнер, çĕрулми—150 центнер, нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕ—1,25 центнер, çавăн пекех ытти ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме планпа панă заданисене ирттерсе пурнăçламалла.

Уйрăм колхозсем тата уй-хир бригадисем пысăкрах обязательствăсем илеççĕ.

«Гвардеец» колхоз тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсем кашни гектартан 23-шер центнер, Молотов ячĕпе тăракан тата «Дружба» колхозсем — 17-шер центнертан кая мар илме пулаççĕ. «Гвардеец» колхозри Н. Платонов бригади тĕштырă акнă пĕтĕм лаптăк çинче кашни гектартан 24-шар центнертан кая мар, В. Щукин бригади—40 гектар çинчен кашни гектартан 26-шар центнер ыраш, тĕштырă акнă пĕтĕм лаптăк çинче кашни гектартан 24-шар центнер пухса кĕртме пулчĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхозри В. Нянин бригади кашни гектартан тĕштырă 20-шер центнер, И. Васильев бригади 19-шар центнер пухса кĕртме пулчĕç. «Дружба» колхозри И. Галяутдинов тата Н. Галлямова ертсе пыракан бригадăсем кашни гектартан 19-шар центнер тĕштырă пухса кĕртме пулчĕç.

Çакăн пек пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесе, эпир колхоз производствинче наука çитĕнĕвĕсене тата ялхуçалăхĕнче малта пыракансен пуян опытне пурнăçласа пыма, ялхуçалăхĕнчи хăватлă техникăпа тухăçлă ĕçлеме сăмах паратпăр. Хĕл вăхăтĕнче 10 пин гектар çинче юр тытса хăваратпăр, 85 пин тонна тислĕк пухса уя кăларатпăр, кĕл 5 пин центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 2.500 центнер пухатпăр, минераллă удобренисем 5.000 центнер кӳрсе килетпĕр. Тĕштырă культурисем акнă чухне 650 гектар çинче ретсене пĕрчĕлетнĕ суперфосфат сапатпăр, 3.500 гектар çинчи калчана вырăнти тата минераллă удобренисем сапса апат паратпăр, 4.000 гектар çинчи кĕрхи тырă калчине вăхăтра сӳрелес ĕçе организацилетпĕр.

Мартăн 10-мĕшĕччен çураки валли уйăрнă вăрлăха цĕтĕмпех тасатса, акма хатĕрлесе çитермелле, пĕтĕм ялхуçалăх машинисене, инвентаре, ут таврашне юсаса çитермелле.

Çуракине пысăк пахалăхпа 7—10 ĕç кунĕ хушшинче ирттермелле. Вăрлăха яровизацилес, вутпуççинчен тасатас, сывлăшпа ăшăтас ĕçе анлă организацилемелле. Çурхи тĕштырăсене тата кĕрхи культурăсене хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майпа 2.600 гектартан кая мар, вирĕне хура тулла 850 гектартан кая мар сарлака ретпе акмалла.

Вăрлăхлăх участокĕсене пысăк сортлă вăрлăхпа кăна акмалла.

Июнĕн 10-мĕшĕччен ирхи çĕртме туса пĕтермелле, çĕртме тунă уя кăпăшка тата çумкурăксенчен таса тытса тăмалла.

Тырпула искусственнăй майпа 4.300 гектартан кая мар шăркалантармалла.

Тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле: кĕрхи культурăсене 7 ĕç кунĕ хушшинче, çуртрие 15 ĕç кунĕ хушшинче, тырă вырса пĕтерсен 10 кун иртиччен пĕтĕм тырпула капана хурса пĕтермелле.

Техникăллă культурăсем акса тăвас ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Техникăллă культурăсем акса тума кашни колхозрах ятарласа бригадăсем е звеносем организацилемелле.

Çуракине тухиччен кĕске вăхăтлăха йĕркеленĕ курссенче бригадирсем, яровизаторсем, химизаторсем, сеяльщиксем—пĕтĕмпе 220 çын хатĕрлемелле, агрозоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссенче вĕренӳ çулне йĕркеллĕ вĕçлемелле.

Мĕнпур колхозсенче курăк акнă тĕрĕс пусă çаврăнăшĕ туса хурассине хăвăртлатас шутпа, 1.500 гектартан кая мар нумай çул ӳсекен курăксем акмалла.

Уя хӳтĕлемелли вăрман тăрăхĕсем тума 50 гектартан кая мар лаптăк çине йывăç лартмалла, 100 пĕвепе кӳлĕ тумалла.

Колхозсенче 10 гектар çинче çĕнĕ садсем тата çырла пахчисем тумалла.

2. Общественнăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши вылăхсемпе кайăк-кĕшĕк енĕпе те кашни колхозăн тата пĕтĕм район тăрăх 1953 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне—Октябрьти Социализмлă Аслă революци пулнăранпа 36 çул тултарнă тĕле пурнăçламалла.

Колхоз фермисенчи пĕтĕм çамрăк вылăха упраса хăвармалла тата кашни 100 ама пуçне: 60 тихаран кая мар, пăру—90, пӳтек—110 тата кашни сысна ами пуçне 14 çураран кая мар пăхса ӳстермелле.

Вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелле. Сăвакан кашни ĕне пуçне 1.250 килограмм сĕт, çитĕннĕ кашни сурăх пуçне 3 килограмм çăм, кашни чăхран—90 çăмарта илмелле.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Совет Союзĕ тăрăх



Сталинградгидрострой Сталинград гидроэлектростанцине тунă çĕрте ĕç саралсах пырать.

Укерчĕк çинче: Атăлăн сулахай сыранĕнче перемычка тума металл юпасем çапса лартаççĕ. Çав перемычка ГЭС çуртĕ пулмалли вырăнти котлована çуркунне шыв туласран сыхламалла.

В. СОБОЛЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

★ ★

Наукăллă сесси

АЛМА-АТА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Казах ССР-ĕнчи Киров ячĕпе тăракан государство университетĕнче И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă ĕçĕ тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тăрăх наукăллă сесси пулса иртнĕ. Сессире чылай докладсем итленĕ.

Сесси ĕçне университет преподавателĕсем, медицина, педагогика тата юридически институт преподавателĕсем, вăтам шкулсенче вĕрентекен учительсем тата студентсем хутшăннă.

Экспонатсем хатĕрлеççĕ

Союзлă республикăсенче, крайсемпе облаçсенче радио ĕçне юратакан конструкторсем Пĕтĕм Союзри XI-мĕш выставкине хатĕрленес ĕç пырать.

Çарпа авиаци тата флот ĕçне пулăшакан ирĕклĕ обществăн пуçламăш организацийĕсен членĕсем халех ĕнтĕ тĕрлĕрен экспонатсем çĕршер хатĕрленĕ. Вĕсем хушшинче нумай лампăллă тата детекторлă радиоприемниксем, телевизорсем, радиолăсем, сасă çыракан аппаратсем, кĕске хумлă тата питĕ кĕске хумлă радиостанцисем, виçмелли приборсем тата ыттисем те пур.

Мускав хулинчи Досааф радиоклубĕн членĕсем Пĕтĕм Союзри выставка валли 150 экспонат хатĕрлеççĕ. Горький облаçĕнчи радио ĕçне юратакансем выставкăна 40 экспоната ярса тăратаççĕ. Литва ССР-ĕнчи досаафовецсем 70 экспонат хатĕрленĕ. (ТАСС).

◆

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ ВЕСЕНЧĔН КАКАРСА ĔÇЛЕКЕЙ МАШИНАСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Тракторсем юсанă	Плугсем юсанă	Сеялкăсем юсанă	Культиваторсем юсанă
Йĕпреç	100	100	100	100
Сĕнтĕр	90,7	100	87,9	100
Çĕмĕрле	87,8	78,9	74,1	95,6
Пăрачкав	86,9	100	100	100
Комсомольски	80	100	97,5	92,7
Кувакино	77,1	60	63,6	45,8
Шăмăршă	77	50,9	65,8	69,6
Чкаловски	73,2	69,6	93	75,5
Элĕк	71,7	75	71	80
Ишлей	71,4	87,5	80	77,8
Вăрнар	69,6	75,9	61,1	47,6
Первомайски	69,1	94	88,9	86,4
Шăхасан	67,8	81,4	71,4	92,6
Вăрмар	65,5	45,2	69,5	48
Сурмайдан	64,3	65,9	55,5	76,5
Красноармейски	64,1	100	68,2	90,9
Тăвай	63,6	62	76,8	77,8
Çĕрпӳ	63,1	60	71,4	75,4
Елчĕк	62,8	65,8	80	52,6
Етĕрне	62,5	92,1	46,6	60,7
Улатăр	62,5	74,1	67,8	72,7
Октябрьски	59,6	71,4	69,4	62,2
Сиява	58,8	59,4	80,9	100
Сĕнтĕрвăрри	58,3	46,4	72,2	50
Шупашкар	57,4	50	53,1	48,6
Канаш	55,8	67,4	59,5	71
Муркаш	55	78,9	68,4	81,2
Куславкка	54	68,2	65	70,3
Калинино	50	61,4	68,4	68,1
Чурачăк	46,4	74,4	80	73,9
Советски	42,8	100	100	100
Хĕрлĕ Чутай	35,7	39,6	59,1	50

Чкаловски районӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС работникӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсем Чӑваш АССР ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫченсене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ—1-мӗш страницӑра).

Тӑватӑ колхозра ҫуллахи вӑхӑтра ӗнесене килте тӑрантарса усрассине йӗркелемелле, пӗтӗмпе 170 ӗнерен кая мар пулмалла.

Кашни колхозра утар тата унта 50 вӗллерен кая мар пыл хурт ҫемйи пулмалла. Кашни вӗллерен 35 килограмран кая мар пыл илмелле.

Уйрӑм колхозсем тата выльӑх-чӗрлӗх фермисен работникӗсем хӑйсем ҫине пысӑкрах обязательствӑсем илеҫҫӗ.

«Гвардеец» колхоз кашни ӗнерен 2.300-шер килограмм, ҫак колхозри доярка Н. Заплаткина—2.500-шер килограмм, М. Плешкова—2.400-шер килограмм сӗт суса илме пулаҫҫӗ. Ҫав колхозри сурӑх ферми заведующийӗ М. Платонов юлташ кашни 100 сурӑх пуҫне 120-шер путек пӑхса ӳстерме тата ҫитӗннӗ кашни сурӑхран 3,5-шер килограмм ҫӑм касса илме пулчӗ.

«Восход» колхоз кашни ӗнерен 1.550-шар килограмм сӗт суса илме тата кашни ама сысна пуҫне 17-шер ҫура пӑхса ӳстерме пулчӗ. Ҫак колхозри дояркӑсем Н. Спиридонова тата Н. Головина 1.600-шер килограмм сӗт суса илме, свинарка Ф. Николаева 22-шер ҫура пӑхса ӳстерме пулчӗҫ.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз кашни сӑвакан ӗнерен 1.500-шер килограмм сӗт, Жданов ячӗпе тӑракан колхоз—1.300-шер килограмм сӗт суса илме пулчӗҫ.

Молотов ячӗпе тӑракан колхоз кашни ама сысна пуҫне 18-шар ҫура пӑхса ӳстерме пулчӗ.

Киров ячӗпе тӑракан колхозри сурӑх ферми заведующийӗ С. Железов юлташ кашни 100 сурӑх пуҫне 115-шер путек пӑхса ӳстерме тата кашни сурӑхран 3,2-шер килограмм ҫӑм касса илме пулчӗ.

Кашни колхозра обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх валли выльӑх апачӗн ҫирӗп никӗсне туса хумалла, ҫавӑн пек тума выльӑх апачӗ валли кирлӗ культурӑсем акма ҫирӗплетсе панӑ плана пӗтӗмпех тултармалла, вӑтам шутпа кашни гектартан 35 центнертан кая мар нумай ҫул ӳсекен курӑк утти, 300 центнертан кая мар тымарҫимӗҫ, 150 центнертан кая мар силос культурисем пухса кӗртмелле. 150 гектар ҫарансемпе кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсене лайӑхлатмалла. Сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне силос хумалли плана тултармалла, вӑл шутран тырпул пухса кӗртме тытӑниччен плана 80 процентран кая мар тултармалла. Выльӑх апатне ҫирӗп учета илсе, унпа типтерлӗн усӑ курмалла, выльӑхсене париччен апата лайӑхрах хатӗрлемелле.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе йывӑр ӗҫсене механизацилемелле, икӗ колхозра фермӑсене шыв парса тӑрас ӗҫе механизацилемелле. Кашни колхозра кормозапарниксем, кормокухньӑсем тата выльӑх апачӗ хатӗрлемелли ытти машинӑсем пулмалла.

Кашни колхозрах выльӑх апачӗ хатӗрлес енӗпе ӗҫлекен бригадӑсем пулмалла.

Колхозсенчи мӗнпур обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе кайӑк-кӗшӗк валли сурт-йӗр ҫителӗклӗ пулмалла. Октябрӗн 1-мӗшӗччен выльӑх-чӗрлӗх ҫурчӗсене пӗтӗмпех юсаса пӗтермелле тата 80 лаша валли, 400 ӗне валли, 400 пӑру валли, 600 сурӑх валли, 1.300 сысна валли, 7.000 пуҫ кайӑк-кӗшӗк валли, 10.300 пуҫ чӗпӗ валли ҫӗнӗ витесем, 1.000 тонна силос хумалӑх силос башнисем тата ҫурмабашньӑсем тумалла. Строительство планне тултарма колхозсенчи строительство бригадисене пурне те ҫирӗплетмелле, ҫав бригадӑсене ҫулталӑкӗпех строительствӑра тата выльӑх-чӗрлӗх ҫурчӗсене юсанӑ ҫӗрте кӑна ӗҫлеттермелле.

3. Машина-трактор станцийӗн механизаторӗсем мӗнпур тракторсене, комбайнсене тата ялхуҫалӑхӗнчи ытти машинӑсене вӑхӑтра тата лайӑх юсама, тракторсемпе тата ытти ялхуҫалӑх техникипе тухӑҫлӑ ӗҫлеме, кашни тракторпа, сеялкӑпа, комбайнпа тата молотилкӑпа сменӑри нормӑна, ҫавӑн пекех талӑкри задание тултарма тата ирттерсе тултарма пулаҫҫӗ.

Ҫемҫе суха ҫине куҫарса шутласан, 15 лаша вӑйлӗ кашни тракторпа 500 гектартан кая мар ӗҫ тумалла, самоходнӑй комбайнпа 300 гектар, «Сталинец» комбайнпа 400 гектар тырӑ вырмалла, кашни сложнӑй молотилкӑпа 700 тоннӑран кая мар тырӑ ҫапмалла. Горючипе сӗрмелли материалсем 5 процентран кая мар перекетлемелле, тракторпа тунӑ ӗҫсен хӑйне ларакан хакне 3 процент чакармалла. Трактор тата уй-хир бригадисен ӗҫне тачӑ ҫыхӑнтарса йӗркелесе, машина-трактор станципе колхозсем хушшинче ҫирӗплетнӗ договорсем тӑрӑх йышӑннӑ обязательствӑсене ҫирӗп пурнӑҫласа пымалла, ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсене агротехника тӗлӗшӗнчен чи лайӑх сроксенче тата пысӑк пахалӑхпа туса ирттермелле, ҫапла вара колхозсенче вӑйлӑ тырпул пӑхса ӳстермелле тата обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла вӑйлӑн аталантармалла.

Районта малта пыракан механизаторсем пысӑкрах обязательствӑсем йышӑнчӗҫ.

А. Михайлов ертсе пыракан трактор бригади хӑй ӗҫлекен 500 гектар ҫинче кашни гектартан 23-шер центнертан кая мар тӗштырӑ, ытти лаптӑкран—20-шер центнертан кая мар туса илме пулчӗ. Суха ҫине куҫарса шутласан, 15 лаша вӑйлӗ кашни тракторпа 850 гектар чухлӗ ӗҫ тумалла, самоходнӑй комбайнпа 320 гектар тырӑ вырмалла, кашни молотилкӑпа 750 тоннӑран кая мар авӑн ҫапмалла, горючи 10 процентран кая мар перекетлемелле, машинӑсене техника енӗпе пӑхса тӑма тата юсама панӑ укҫаран 3.500 тенкӗрен кая мар перекетлемелле, кашни трактор пуҫне тунӑ ӗҫӗн хӑйне ларакан хакне 1 тенкӗ те 25 пус йӳнетмелле.

Виноградов тата Павлов трактористсем хӑйсем ӗҫлекен Киров ячӗпе тӑракан колхозра 150 гектар ҫинче вӑтам шутпа кашни гектартан 17-шер центнертан кая мар тӗштырӑ туса илме пулчӗҫ. Суха ҫине куҫарса шутласан, «ДТ-54» тракторпа 1.700 гектар чухлӗ ӗҫ тумалла, 500 килограмран кая мар горючи перекетлемелле, машинӑсене техника енӗпе пӑхса тӑма тата юсама панӑ укҫаран 300 тенкӗ перекетлемелле.

Машинист А. Кириллов МК-1100 молотилкӑпа 900 тоннӑран кая мар тырӑ ҫапма, машинӑна техника енӗпе пӑхса тӑма тата юсама панӑ укҫаран 300 тенкӗ перекетлеме пулчӗ.

4. Тырӑ хатӗрлеме государство панӑ плана пур колхозсем тӑрӑх та октябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр тултармалла, государствӑна ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли плана ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултармалла.

5. Районти ялхуҫалӑх специалисчӗсем уй-хир ӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре наукӑллӑ ӗҫ меслечӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешсе активлӑ пропагандистсемпе организаторсем пулма, агротехникӑпа ветеринари мероприятийӗсене пурнӑҫлас тата колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетес ӗҫре колхозсене практикӑллӑ пулӑшу пама пулаҫҫӗ.

Эпир обществӑллӑ хуҫалӑха тӗреклетсе аталантарма, пайланман фондсене ӳстерсе артельсен хуҫалӑхне пур енчен те аталантарма тата пысӑк тупӑшлӑ тума мӗн кирлине пурне те тӑватпӑр.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне пур майсемпе те малалла ӳстерсе пыратпӑр тата ӗҫ дисциплинине ҫирӗплететпӗр. Ҫапла тӑватпӑр: вӑйпитти кашни колхозник ҫулталӑк хушшинче 250 ӗҫкунӗнчен кая мар тутӑр. Ҫав шутпа колхозсенчи ӗҫ вӑйӗн ресурсӗсене тӗрӗс вырнаҫтарса тухатпӑр, яланлӑха тунӑ производство бригадисене — коллективлӑ ӗҫӗн чи паха та тӗп форми пулса тӑракан бригадӑсене ҫирӗплетме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнатпӑр.

Хамӑр ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илсе, эпир Елчӗк районӗнчи колхозниксене, МТС работникӗсене тата ялхуҫалӑх специалисчӗсене пирӗнпе социализмла ӑмӑртса ӗҫлеме чӗнетпӗр, ҫавӑн пекех Чӑваш АССР ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫченсене 1953 ҫулта ялхуҫалӑхне аталантармалли плана ӑнӑҫлӑ тултарма, партин XIX-мӗш съезчӗ лартнӑ задачӑсене чыслӑ пурнӑҫлама социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнетпӗр.

Сталинла пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗнчи плана ӑнӑҫлӑ тултарни Совет государствин хӑватне ӳстерес, пирӗн ҫӗршывра коммунизм тӑвас ӗҫре ҫав тери пысӑк ҫитӗнӳ тунине пӗлтерет.

Сывӑ пултӑр пирӗн социализмлӑ Тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ—пирӗн ҫӗнтерӳсен хавхалантаракан тата организаторӗ!

Сывӑ пултӑр тата нумай-нумай ҫулсем хушши пурӑнтӑр пирӗн юратнӑ ҫулпуҫӑмӑр тата учителӗмӗр **Сталин юлташ!**

Чӗнсе каланине колхозниксен, механизаторсен, ялхуҫалӑх специалисчӗсен пӗрлехи пухӑвӗсенче тата ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен районти канашлӑвӗнче йышӑннӑ.

Ӗҫ кая юлса пырать

КАЛИНИНО. Ҫӗнъялти «Правда» колхоз членӗсем кӑҫал гектартан 18 центнертан кая мар тӗштырӑ туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫуракине хатӗрленсе, уй-хир бригадисем ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтернӗ. Колхоз кӑҫал сортлӑ вӑрлӑхсем кӑна акать. Вӑрлӑхсене сортланӑ, акма хатӗрленӗ.

Районти «Трактор», Мичурин ячӗпе тӑракан, «Салют», Молотов ячӗпе тӑракан, «1-ое Мая» колхозсем те ҫуракине тӗплӗн хатӗрленеҫҫӗ.

Анчах районти пур колхозсенче те ҫуракине кирлӗ пек хатӗрленмеҫҫӗ-ха. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз вӑрлӑх ҫителӗклӗ хывман, ҫуракинче акма 20 центнер кантӑр вӑрри, 65 центнер вика ҫитмест тата нумай ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхӗ те, ҫӗрулми вӑрлӑхӗ те чылай ҫитмест. Апла пулин те, колхоз председателӗ Антонов юлташ вӑрлӑхсем тупса хатӗрлеме тӑрӑшмасть. Пур пек вӑрлӑхсене те сортлама тытӑнман. Ҫавӑн пекех ҫураки валли вырӑнти удобренисем те хатӗрлемеҫҫӗ. Уй-хире пӗр лав та тислӗк кӑларман, ялхуҫалӑх машинисем те юсавлӑ мар. Ҫавӑн пек ҫитменлӗхсемех Маленков ячӗпе, Карл Маркс ячӗпе, Калинин ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсенче те пур. Асӑннӑ колхозсен правленийӗсемпе парторганизацисем ҫуракине хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн кӗрешмеҫҫӗ. Районти колхозсенче уйрӑмах торф хатӗрлес, вырӑнти удобренисене пухас ӗҫ юлса пырать.

Б. ШОРНИКОВ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Коммунистсене политика тӗлӗшӗнчен сыхӑ пулма воспитани памалла

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Уставӗ парти членне партипе государство вӑрттӑнлӑхне ҫирӗппӗн пӑхӑнма, политика тӗлӗшӗнчен сыхӑ пулма, коммунистсен революциллӗ сыхӑлӑхӗ кирек хӑш участокра та тата кирек мӗнле лару-тӑрура та кирлӗ пулни ҫинчен асра тытма хушать. Партипе государство вӑрттӑнлӑхне ыттисене пӗлтерни парти умӗнче преступлени туни пулать, ун пек ӗҫ тӑвакан ҫын парти ретӗнче пулма тивӗҫлӗ мар.

Уставӑн ҫак требованийӗн пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк. Партин XIX-мӗш съезчӗ ҫакна кӑтартса пачӗ: вӑрҫа ҫӗнтерӳпе пӗтернине пула тата вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта хуҫалӑхра пысӑк ҫитӗнӳсем тунине пула парти речӗсенче харпӑр хӑй ӗҫӗпе киленес, обыватель пек лӑпкӑ пурӑнас кӑмӑлсем палӑрчӗҫ. Парти, хуҫалӑх, совет работникӗсемпе ытти работниксем хушшинче сыхӑлӑха мӑкатни палӑрать, ҫӑвар карса ларни, партипе государство вӑрттӑнлӑхне тытманни ҫинчен калакан фактсем пур.

Парти совет ҫыннисене тӑшмансен вӑрттӑн ӗҫӗсене ҫивӗччӗн асӑрхаса тӑма вӗрентет. Эпир малалла мӗн чухлӗ хӑвӑртрах каятпӑр, пирӗн тӑшмансем пире хирӗҫ ҫавӑн чухлӗ хаяртарах кӗрешме хӑтланни ҫинчен пирӗн нихҫан та манмалла мар.

Тӑшман пирӗн хӑшпӗр ҫынсем тимсӗр пулнипе усӑ курма хӑтланать. Ҫавӑнпа та партипе совет, хуҫалӑх кадрӗсен политика тӗлӗшӗнчи сыхӑлӑхне ӳстересси, тимсӗрлӗхе, ҫӑвар карса ларнине хирӗҫ кӗрешесси парторганизацисен тивӗҫӗ пулать.

Политикӑллӑ сисӗмлӗхе ӳстерес тени вӑл, чи малтан, парти речӗсен тасалӑхне ҫирӗппӗн сыхлас тенине пӗлтерет. Ҫавӑнпа та партин Центральнӑй Комитечӗ парторганизацисене парти ретне ҫӗнӗрен илнӗ чухне кашни ҫынна уйрӑммӑн пӑхма тата политика тӗлӗшӗнчен сыхӑ пулма пӗрре ҫеҫ мар кӑтарту панӑ.

Шупашкар районӗнчи парторганизацире парти ретне ҫӗнӗрен илес ӗҫре пысӑк йӑнӑшсем пулнӑ. Хӑшпӗр чухне пуҫламӑш парторганизацисем тата райком бюровӗ те партие кӗрекен ҫыннӑн политикӑллӑ сӑн-сӑпачӗпе сахал интересленнӗ. Ҫавӑн пирки ӗнтӗ пӗррехинче парти ретне политика тӗлӗшӗнчен шанчӑксӑр ҫынна илнӗ. Ку ҫын парти ретне ултавлӑ майпа кӗнине райком хӑй те пӗлнӗ, анчах юлашки вӑхӑтченех вӑл ун ҫинчен сӳтсе явман.

Парти ретне ҫӗнӗрен илес ӗҫ ҫине малашне тата тимлӗрех пӑхмалла. Кашни парторганизаци ҫынна парти ретне илес умӗн унӑн ӗҫри тата политикӑллӑ пахалӑхӗсене тӗплӗн тӗпчесе пӗлмелле. Парти организацийӗ хӑйӗн ретне мӗнле ҫынна илни ҫине пӗр коммунист та лӑпкӑ кӑмӑлпа пӑхма пултараймасть.

Парти мӗнпур коммунистсене хӑйсен парти докуменчӗсене лайӑх сыхласа усрама, ку ӗҫре уйрӑмах сыхӑ пулма хушать. Анчах парти докуменчӗсене сыхласа усрас енӗпе те пирӗн ӗҫре чылай ҫитменлӗхсем пур.

Пирӗн кашни парторганизацирех коммунистсене парти докуменчӗсене лайӑх сыхласа усрассишӗн пысӑк ответлӑх туйса тӑма воспитани памалла. Тимсӗрлӗхе пула ҫухатнӑ партдокументсем тӑшман аллине лекме пултарни ҫинчен коммунистсене ҫирӗппӗн асӑрхаттарса тӑмалла, партдокумента ҫухатнӑ кашни тӗслӗх ҫинчен коммунистсен пухӑвӗнче тӗплӗн сӳтсе явмалла.

Парторганизацисен хуҫалӑхне тытса тӑрас ӗҫре те йӗркесӗрлӗхсем пур. Хӑшпӗр пуҫламӑш парторганизацисенче парти докуменчӗсене усрама ятарласа тунӑ вырӑнсем ҫук, уйрӑм секретарьсем вара ун пек документсене хӑйсен килӗсенче усраҫҫӗ. Парти райкомӗ халӗ ҫавӑн пек ҫитменлӗхсене пӗтерме, пуҫламӑш парторганизацисен хуҫалӑхӗсенче ҫирӗп йӗрке туса хума мерӑсем йышӑнать.

Коммунистсем, уйрӑмах ертсе пыракан работниксем, политика тӗлӗшӗнчен сыхӑ пулмалли пысӑк участок вӑл — кадрсем уйӑрса лартас ӗҫ пулать. Шупашкар районӗнчи парторганизацире кадрсене суйласа илес тата ӗҫе вырнаҫтарса тухас енӗпе юлашки ҫулсенче пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ. Парти райкомӗ кадрсене суйласа илнӗ чухне работниксен ӗҫри тата политикӑллӑ пахалӑхӗ ҫине пӑхас принципа пӑхӑнма тӑрӑшнӑ. Анчах ку ӗҫре те пирӗн ҫитменлӗхсем сахал мар.

Кадрсене суйласа илес ӗҫре партиллӗ принциплӑха пӑснӑ пирки ертсе пыракан вырӑнсене тӗрӗслемен е тата юрӑхсӑр ҫынсемех кӗрсе ларнисем пулнӑ. Колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене суйласа илес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ пирки колхоз председателӗсене суйласа лартнӑ чухне пысӑк йӑнӑшсем тунӑ.

Парти райкомӗ сӗннипе, Фрунзе ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ пулма М. Тимофеев юлташа суйланӑ. Государство интересӗсемшӗн кӗрешес, обществӑллӑ харпӑрлӑха сыхласа усрас, колхозӑн, унтан колхозниксен тупӑшне ӳстерме тӑрӑшас вырӑнне, Тимофеев юлташ колхоз пурлӑхне салатас ҫул ҫине тӑнӑ. Вӑл колхоз утине тата ытти продуктсене сутса ӗҫнӗ, колхозниксем хушшинчи ӗҫ дисциплинине хавшатнӑ, бригадирсем пулма тӗрӗс мар ҫынсене, ӗҫме юратакансене уйӑрса лартнӑ.

Тимофеев юлташ хӑйне киревсӗр тыткаланине парти райкомӗ пӗлнӗ, анчах вӑхӑтра тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман. КПСС Чӑваш обкомӗ хутшӑннӑ хыҫҫӑн кӑна Тимофеев юлташа ҫирӗп наказани панӑ тата ӗҫрен кӑларнӑ.

Каганович ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ пулма Михайлов юлташа суйлама сӗнни те пысӑк йӑнӑш пулнӑ. Михайлов юлташ, партипе государство умӗнчи ответлӑха ҫухатса, обществӑллӑ хуҫалӑха салатма, чарусӑр ӗҫме тытӑннӑ, колхоза аталантарас ӗҫе хӑй чӑрмантарнӑ.

Ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑснӑшӑн, колхозри мӗнпур ӗҫсене юхӑнтарнӑшӑн парти райкомӗ Михайлов юлташа парти ретӗнчен кӑларма решени йышӑнчӗ.

Суту-илӳпе коопераци учрежденийӗсенче кадрсене уйӑрса лартас ӗҫре пысӑк йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ, руководительсен тимсӗрлӗхӗпе усӑ курса, суту-илӳ ӗҫне шанчӑксӑр ҫынсем, жуликсем шӑвӑнса кӗреҫҫӗ.

Самарин хушаматлӑ ҫынна, никам та нимӗн чухлӗ тӗрӗслемесӗр, Кӳкеҫри ялпо склачӗн заведующийӗ пулма уйӑрса лартнӑ. Самарин ялпо пурлӑхне 13 пин тенкӗлӗх салатнӑ та тухса тарнӑ.

Ф. Павлов юлташ темиҫе ҫул хушши Чкасси ялповӗн председателӗ пулса ӗҫленӗ. Вӑл совет суту-илӗвӗн правилисене пӑснӑ, хӑйӗн службӑри вырӑнӗпе усӑ курнӑ, тавар туянакансене улталанӑ, хӑйӗнпе туслашса кайнӑ растратчиксене Демьянова, Захарова, Егорова тата ыттисене те хӳтӗлесе тӑнӑ.

Парти райкомӗ Ф. Павлова парти ретӗнчен кӑларчӗ, халӑх сучӗн приговорӗпе ӑна 7 ҫул хушши тӗрмере хупса усрамалла тунӑ.

Ҫак тӗслӗхсем вӗсем работниксене суйласа лартас ӗҫре политикӑллӑ сисӗмлӗхе халӗ нихҫанхинчен ытларах ӳстерме кирли ҫинчен калаҫҫӗ. Политикӑллӑ тимсӗрлӗхе тата ҫӑвар карса ларнине пӗтерес тесен, идеологиллӗ ӗҫе партин XIX-мӗш съезчӗ хушнӑ пек вӑйлатса пымалла.

Партин XIX-мӗш съезчӗ идеологиллӗ ӗҫ партин чи пысӑк обязанноҫӗ пулнине, ку ӗҫе хакламанни партипе государство интересӗсене питӗ пысӑк сиен кӳме пултарнине кӑтартса пачӗ. «Идеологи ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗҫ вӑйсӑрланнӑ ҫӗрте пирӗнпе тӑшманла шухӑшсемпе ӑнланусем чӗрӗлме лайӑх майсем пулса тӑраҫҫӗ»,—терӗ Г. Маленков юлташ партин XIX-мӗш съездӗнче тунӑ отчетлӑ докладра.

Партин XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсене, «Парти вӗренӗвӗ мӗнле пыни тата ӑна лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен» КПСС Чӑваш обкомӗн II-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлас тӗлӗшпе партин Шупашкар райкомӗ чылай ӗҫсем туса ирттерчӗ.

Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче парти вӗренӗвне 889 ҫынна явӑҫтарнӑ, вӑл шутра коммунистсем—492, комсомолецсем—87, партире тӑманнисем — 310 ҫын. Анчах парти вӗренӗвне йӗркелес тата ертсе пырас ӗҫре чылай ҫитменлӗхсем пур, парти Чӑваш обкомӗ пирӗн ӗҫри йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсене уҫса палӑртрӗ.

Районти парторганизацинче парти вӗренӗвӗн шайӗ паянхи требованисен ҫӳлешӗнче тӑраймасть-ха. Коммунистсенчен пӗр пайне политикӑллӑ вӗренӗве юлашки вӑхӑтченех явӑҫтарайман. Коммунистсем марксизм-ленинизм теорине харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренес ӗҫе йӗркелессинче те пысӑк ҫитменлӗхсем пур.

Парти обкомӗ КПСС райкомне идеологиллӗ ӗҫе хакламаннине татӑклӑнах пӗтерме, партиллӗ пропагандӑна ертсе пырассине лайӑхлатма, коммунистсемпе кадрсен политикӑллӑ вӗренӗвӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме хушрӗ.

Парти райкомӗ ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе конкретлӑ мерӑсем йышӑнчӗ, кружоксемпе политшкулсене ертсе пыракансен составне ҫирӗплетрӗ, политикӑллӑ вӗренӗве ертсе пырас ӗҫре пуҫламӑш парторганизацисен ответлӑхне ӳстерчӗ. Парти райкомӗн библиотекинче партин XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсем тата Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ генилле ӗҫӗ ҫинчен лекцисем тӑтӑш ирттереҫҫӗ.

Коммунистсемпе кадрсене идейӑллӑ-политикӑллӑ воспитани парас ӗҫе партин XIX-мӗш съезчӗ хушнӑ пек тӗпрен ҫӗнетсе лайӑхлатни, революциллӗ сисӗмлӗхпе сыхӑлӑха ҫивӗчлетсе пыни коммунизм строительствин аслӑ задачисене пурнӑҫлассишӗн пыракан кӗрешӳре пире ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума май парӗ.

М. ЗАЙЦЕВ.

КПСС Шупашкар райкомӗн секретарӗ.

КРАЕВЕДЕНИ МУЗЕЙӖНЧЕ

АСТРАХАНЬ, мартӑн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Краеведени музейӗнче крайӑн иртнӗ вӑхӑтри пурнӑҫне кӑтартакан пайне аслӑлатмалли ӗҫсене туса пӗтернӗ.

Фотографисем ҫинче купецсем хуҫаланнӑ чухнехи пылчӑк айне пулнӑ хула сӑн-сӑпатне кӑтартнӑ. Иртнӗ ӗмӗрти 80-мӗш ҫулсем ҫитиччен кунта пӗр кӗнеке магазинӗ те, пӗр культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗ те пулман. Халӑхӑн 97 проценчӗ хут пӗлмен. Нумай экспонатсем пулӑ тата тӑвар промыслисенче ӗҫленӗ рабочисен йывӑр пурнӑҫне кӑтартаҫҫӗ.

Музейре Т. Г. Шевченко Астраханьте пулнине кӑтартакан уйрӑм уҫнӑ. Кунта Шевченко дневникӗнчен илнӗ страницӑсене, вӑл ӳкернӗ кивӗ Астрахань хулине кӑтартнӑ.

Районти хаҫатсене пӑхса тухни

„Вӑйлӑ тырпулшӑн“ хаҫатӑн пӗр номерӗ

Коммунизмла общество тӑвас ӗҫӗн задачисем вырӑнти пичет ӗҫне ҫӗнӗ пусӑма хӑпартма, хаҫат редакцийӗпе вулакансем хушшинчи ҫыхӑнӑва ҫирӗплетме, хаҫат ӗҫне редакци тулашӗнчи авторсене ытларах хутшӑнтарма хушаҫҫӗ. Хаҫат редакцийӗ авторсен йышлӑ активӗсӗр, хӑйӗн умӗнче тӑракан ответлӑ та пысӑк задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама пултараймасть. Авторсен активӗсӗр тӑрса юлнӑ хаҫат час-часах вулакансене ҫырлахтараймасть.

Уйрӑм хаҫатсен работникӗсем хӑйсен хаҫачӗ кичем тухнине тӗрлӗ сӑлтавсемпе витме пӑхаҫҫӗ: чи малтан, хаҫат пӗчӗкки ҫине йӑвантараҫҫӗ. Шӑхасан районӗнчи «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаҫатӑн (редакторӗ В. Иванов юлташ) кӑҫалхи февралӗн 26-мӗшӗнче тухнӑ 17-мӗш номерӗ ҫавӑн йышши «сӑлтавсене» ҫӑмӑллӑнах сирсе пӑрахать. Ку номер акӑ мӗн ҫинчен калать: хаҫат кӑларас ӗҫе юратса тусан, районти хаҫатӑн хальхи калӑпӑшӗпех унти предприятисенчи, колхозсенчи, машина-трактор станцийӗнчи, шкулсенчи, учрежденисенчи иксӗмсӗр ҫӑлкуҫ пек тапса тӑракан хӗрӳ ӗҫе нумай енлӗн кӑтартса пама пулать, унпа пӗрлех ӗҫри чӑрмавсемпе ҫитменлӗхсене те уҫса палӑртма май пур.

«Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаҫат районти ӗҫҫыннисене партин XIX-мӗш съезчӗ социализмла ялхуҫалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫлама мобилизацилес тӗлӗшпе пуҫарулӑн ӗҫлет. Вӑл тӑтӑшах производствӑра малта пыракансен, ялхуҫалӑх специалисчӗсен, партипе совет, комсомол тата профсоюз работникӗсен статьисене пичетлет. Ку номерте хаҫат пурӗ 22 корреспондентӑн ҫырӑвне пичетленӗ, вӗсем пурте тенӗ пекех—редакци тулашӗнчи авторсем. Хаҫат умстатьи «Уй-хире удобренисем ытларах кӑларар» ятлӑ. Ку номерте ҫакӑн пек пайсем пур: «Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен трибуни», «Редакцине килнӗ ҫырусем», «Хамӑр район тӑрӑх», «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн». Кунсӑр пуҫне пӗр ӳкерчӗк: «Паянхи Мускав. Котельнически Набережнӑйри ҫӳлӗ ҫурт».

Хаҫат умстатьи—ҫивӗч те витӗмлӗ. Унта хаҫат, уй-хире удобрени кӑларас енӗпе малта пыракан Ленин ячӗпе тӑракан колхозри ӗҫсемпе тӗплӗн паллаштарнӑ хыҫҫӑн, ку ӗҫ районта пӗтӗмӗшпе илсен тӳсме ҫук юлса пынине палӑртать, чӑрмавсемпе ҫитменлӗхсене уҫса кӑтартать:

> «Хӗл—удобренисем пухса хатӗрлес тата хире кӑларас ӗҫ ӑнӑҫлӑхне татса паракан вӑхӑт. Ку ӗҫе халӗ кая хӑварса пырсан, ӑна ҫуркунне те, ҫулла та туса ӗлкӗрме ҫук,—тесе ҫырать хаҫат.—Ҫавӑнпа та удобренисем хатӗрлес, хире тислӗк, торф тата юшкӑн тӑпри кӑларас ӗҫе, мӗнпур резервсемпе усӑ курса, кашни кун туса пымалла. Колхоз фермисенчи тислӗкпе усӑ курнисӗр пуҫне колхозниксен килӗсенчи тислӗке хире кӑларассине пур колхозра та организацилемелле».

Вырӑнти Советсен суйлавӗ районта пысӑк активлӑхпа, йӗркеллӗ иртни ҫинчен пӗлтерекен материалсем номерте паллӑ вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Анат Юнтапари 14-мӗш суйлав участокӗнче чи пирвайхи бюллетене 89 ҫулхи колхозница Елена Яковлева илнӗ. Ватӑ пулин те, вӑл пӗлтӗр 168 ӗҫкунӗ тунӑ.

Хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, районти промкомбинат коллективӗ суйлав кунӗ тӗлне пӗрремӗш квартал планне 75 процент тултарнӑ. Унта ӗҫлекенсем хушшинче халӗ Май уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн саралнӑ. Вӗсем производство планне нумай ирттерсе тултарма обязательство илнӗ.

«Хамӑр район тӑрӑх» пайра—интереслӗ информацисем. Н. Грачев корреспондент Атнашри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти учительсем колхозниксем хушшинче тӑтӑшах лекцисемпе докладсем туни ҫинчен пӗлтерет. Кӑҫал уйӑх ҫурӑ хушшинче кӑна вӗсем ҫак темӑсем тӑрӑх лекцисем, докладсем ирттернӗ: «Совет Союзӗ мире сыхлассишӗн тата ӑна ҫирӗплетессишӗн кӗрешни,» «Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑх—СССР социализмран коммунизм патне пырас ҫул ҫинчи пысӑк утӑм», «США империалисчӗсем—тӗнчери халӑхсен хаяр тӑшманӗсем». Кунта ҫавӑн пекех «Шкул ҫулне ҫитмен ачасене ҫемьере воспитани парасси», «Паллӑ совет педагогӗ А. С. Макаренко» тата ытти темӑсем тӑрӑх та докладсем тунӑ. Учительсем агитаторсем пулса тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Ильич ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ С. Васильев юлташ шкул ачисем халӗ кашни вырсарникун колхоз хирне юр тытса хӑварма тухни, ҫак кунсенче 13 гектар ҫинче юр тытни ҫинчен пӗлтерет.

М. Яковлева корреспондент Ухманти «Победа» колхоз членӗсем 1953 ҫулшӑн государствӑна срокчен сӗт-ҫу пани ҫинчен ҫырать. Ҫавӑн пекех ку пайра Совет Ҫарӗн кунне уявлани, Атнашри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти учительсен драма кружокӗн ӗҫӗсем тата йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗ ҫинчен калакан информацисем пичетленнӗ.

«Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен трибунине» хаҫат уйрӑмах юратса туни курӑнать. Ҫак пай номерти иккӗмӗш страницӑри малтанхи виҫӗ колонкӑна йышӑнать. Унта пурӗ 7 материал. Вӗсем ытлашши вӑрӑм мар, кашниех вырӑнлӑ темелле. Трибуна «Герой» колхозри уй-хир бригадин бригадирӗн И. Матвеев юлташӑн статьипе пуҫланать. Вӑл хӑйӗн бригади пӗлтӗр 6 гектар ҫинче вӑтам шутпа 14,5-шер центнер пӑрҫа туса илнӗ опытпа паллаштарать. Кӑҫал унӑн бригади 20 гектар ҫинчен 17-шер центнер пӑрҫа туса илессишӗн кӗрешет. Ленин ячӗпе тӑракан колхозри уй-хир бригадисен бригадирӗсем П. Андреевпа И. Осипов юлташсем кашни гектартан 249-шар центнер тымарҫимӗҫ туса илнӗ опыт ҫинчен калаҫа параҫҫӗ, «Заря» колхозри выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригадӑн бригадирӗ Г. Николаев юлташ хӑйӗн бригади пӗлтӗр 3,5 гектар ҫинче 2,5-шер центнер клевер вӑрлӑхӗ туса илни, кӑҫал 3-шер центнертан кая мар клевер вӑрлӑхӗ туса илессишӗн кӗрешни, районти вир ӑстаҫи Ф. Пуганов (Суворов ячӗпе тӑракан колхозран) ҫерем пӑсса акнӑ пӗр гектар ҫӗр ҫинче пуҫламӑш ҫул 28 центнер вир туса илни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Ку пайра уйрӑмах «Герой» колхозӑн бригадирӗ С. Васильев юлташ ҫырнӑ «Уй-хире вӑрман тӑрӑхӗсем лартса ӳстерни» ятлӑ статья палӑрса тӑрать.

«Аслӑ Сталин пуҫарнипе СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ 1948 ҫулта «ССР Союзӗн Европа пайӗн ҫеҫенхирлӗ тата вӑрманҫеҫенхирлӗ районӗсенче яланах вӑйлӑ тырпул туса илме уй-хире шӑрӑхран хӳтӗлекен вӑрман тӑрӑхӗсем лартасси, курӑксем акмалли уйлӑ пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем, пӗвесемпе кӳлӗсем тӑвасси ҫинчен» постановлени йышӑнчӗҫ, — тесе ҫырать вӑл статьяра.—Ҫак постановленипе хавхаланса, «Герой» колхоз членӗсем сутҫанталӑка улӑштарса ҫӗнетес тӗлӗшпе чылай паха ӗҫсем туса ирттерчӗҫ».

Ку колхоз уй-хире шӑрӑхран хӳтӗлекен вӑрман тӑрӑхӗсем лартса ӳстерме ҫамрӑк йывӑҫсем питомникре ӳстерет. Вӑрман тӑрӑхӗсем тума кунта питомникре ӳстернӗ пӗр-икӗ ҫулхи йывӑҫсене куҫарса лартаҫҫӗ. Колхозра ҫапла майпа лартнӑ вӑрман тӑрӑхӗсем 6 гектар ҫинче йӗркеллӗ хунаҫҫӗ. Статья авторӗ йывӑҫсене питомникре мӗнле пӑхса ҫитӗнтерни, ҫавӑн пекех вӗсене лартнӑ вӑхӑтра тата лартнӑ хыҫҫӑн мӗнле пӑхса ӳстерни ҫинчен тӗплӗн каласа панӑ. 1949 ҫулта лартнӑ йывӑҫсем кунта 2 метр ытла ӳснӗ те ӗнтӗ.

«Редакцие килнӗ ҫырусем» пайра та хаҫат кирлӗ ыйтусене хускатать. МТС-ри рабочисен комитечӗн председателӗ П. Капшин юлташ госстрахӑн районти аслӑ инспекторӗ С. Макаров юлташ бюрократланса кайни ҫинчен ҫырать. Вӑл, ик-виҫӗ хут каласса татӑлнӑ хыҫҫӑн та, МТС-ри рабочисемпе служащисен пухӑвӗнче государство страхованийӗ ҫинчен ӑнлантарса парассинчен тӗрлӗ сӑлтавсем тупса юриех пӑрӑннӑ.

А. Михайлов ялкор районти кинофикаци пайӗнче ӗҫлекенсем умне тӗрӗс те вырӑнлӑ ыйту кӑларса лартать. Вӑл: вӑрман Енӗшри Сталин ячӗпе тӑракан колхозра кино хӑҫан кӑтартӗҫ-ши?—тесе ыйтать. Кинофикаци пайӗнче ӗҫлекенсен айӑпӗпе кунти колхозниксем уйӑхӗпех пӗр картина та курайман.

Редакци хӑйӗн вулакансене хаҫатра пичетленнӗ статьясем тӑрӑх ҫийӗнчех мерӑсем йышӑнни ҫинчен те пӗлтерсе тӑрать. «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн» ятлӑ пайра хаҫат хӑйӗн февралӗн 15-мӗшӗнчи номерӗнче пичетленнӗ «Ҫӑвар карса ларакансем» фельетон тӑрӑх мӗн туни ҫинчен пӗлтерет. Ҫавӑн пекех февралӗн 19-мӗшӗнче пичетленсе тухнӑ фельетон та тӗрӗс пулнӑ. Ку фельетона райсовет исполкомӗн ларӑвӗнче сӳтсе явнӑ. «Дружба» колхозри фермӑсен заведующине М. Алексеева, фермӑри сыснана хӑйӗн килне илсе кайса усранӑшӑн, фермӑри автансене пусса ҫинӗшӗн ӗҫрен хӑтарнӑ тата суд урлӑ ответ тыттармалла тунӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, тӑрӑшсан, номере малтанах тӗрӗс планласа, тӗплӗн хатӗрлесен, хаҫатӑн кашни номерне лайӑхлатнӑҫемӗн лайӑхлатса пыма пулать. Ҫак эпир тишкернӗ номере татах та аванлатма май пулнӑ: ялхуҫалӑхӗнче «Малта пыракансен трибунине» кӑштах пӗчӗклетсе, унта Совет Союзӗнчи паллӑ ӗҫсем ҫинчен, ҫавӑн пекех урӑх ҫӗршывран килнӗ пӗр-икӗ телеграммӑна вырнаҫтарма пулнӑ.

Халӗ, пирӗн парти организацийӗсем партин XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫлассишӗн кӗрешнӗ вӑхӑтра, районти хаҫатсем умне пысӑк та ответлӑ задачӑсем тухса тӑчӗҫ. Вырӑнти пичет парти организацийӗсене ӗҫсыннисене коммунизм обществи тумалли сталинла аслӑ программӑна пурнӑҫлас ӗҫре, ӗҫсыннисене коммунизмла воспитани парас ӗҫре вӑйлӑ пулӑшакансем пулса тӑмалла. Критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарса пырса, хаҫатсен предприятисен, колхозсен, МТС-сен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене вӑхӑтра уҫса палӑртмалла. Ҫапла тӑвас тесен, районти хаҫатӑн кашни номерне тӗплӗн шухӑшласа, авторсен йышлӑ коллективне хутшӑнтарса, хатӗрлес пулать.

Новаторсен опытне анлăн сарар!

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ новаторсен ĕçри лайăх тĕслĕхĕсене тата малалла кайма май паракан пуçарăвĕсене пĕтĕм вăйпа пулăшма, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулăшас тесе, малта пыракан опыта мĕнпур ĕçсыннисен массисем хушшинче çине тăрса сарса пыма хушса хăварчĕ. Республикăри ĕçсыннисене стахановецсемпе рационализаторсен опычĕпе тата меслечĕпе паллаштарас тесе, хаçатра Улатăр хулинчен килнĕ çырусене пичетлетпĕр.

Çĕнĕ меслетсем шыраса

Улатăрти суднăсем юсакан мастерскойри рабочисем чылай çитĕнӳсем турĕç. Суднăсене 1953 çулхи навигаци тĕлне пысăк пахалăхпа юсаса хатĕрлес тесе, кашни рабочи стахановла ĕçлеме тăрăшать.

Пысăк тухăçлă ĕç тата питĕ лайăх пахалăхлă продукци хăйсем тĕллĕн пулмаççĕ. Умра тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлас тесен, пирĕн çине тăрса ĕçлемелле, творчествăллă çĕнĕ меслетсем шырамалла, станоксемпе оборудование тата лайăхрах ĕçлеттермелле, чăрмавсемпе йывăрлăхсене пĕтерсе пымалла.

Эпĕ ĕçре мĕнле майпа пысăк çитĕнӳсем туни çинчен каласа парас тетĕп.

Пирĕн мастерскойра фрезернăй станок çук. Çавăнпа ĕлĕкрех нумай детальсене алăпа тунă. Детальсене алăпа тума вăхăт, укçа-тенкĕ нумай кирлĕ пулнă.

Эпĕ фрезер станокĕпе тăвакан операцисене токарь станокĕпе тăвас тĕллев лартрăм. Нумай вăхăт хушши тăрăшнă хыççăн хамăн тĕллеве пурнăçларăм.

Ĕçе механизациленине пула детальсем туса хатĕрленĕ чухне вăхăт нумай перекетлетĕп. Ĕлĕкрех темиçе слесарь та смена хушшинче пĕр валик хатĕрлеймен пулсан, халĕ çак ĕçе пĕччен сехет çурă хушшинче тăватăп.

Цилиндра якатнă çĕрте токарь станокĕпе усă курас тĕлĕшпе те нумай тăрăшрăм. Çавна пула ĕç тухăçлăхĕ нумай ӳсрĕ, алăпа тумалли йывăр ĕçре пулнă темиçе рабочине урăх ĕçе куçарчĕç.

Газоходсене юсама фанера чылай кирлĕ. Фанерăна касма питĕ йывăрччĕ. Ятарласа туса хатĕрленĕ каскăчпа эпĕ фанерăна мĕнле кирлĕ пек касатăп.

И. Райкин столярпа пĕрле ĕçлесе, эпир ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан чылай меслетсем тупрăмăр. Кирлĕ станоксемпе инструментсем çитмен пирки йывăрлăхсем пулатчĕç. Халĕ çав йывăрлăхсене пĕтертĕмĕр.

Йывăр ĕçсене çăмăллатас тĕлĕшпе платниксен цехĕнчи Н. Ульянов мастер, П. Паркаев столяр, В. Кожемятов тимĕрçĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсен малта пыракан ĕç меслечĕсем суднăсене юсанă çĕрте ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерме пулăшаççĕ.

Сталинла çĕнĕ пилĕк çуллăх плана срокчен тултарас тесен, кашни рабочин техникăна лайăхрах вĕренмелле, шалти резервсемпе анлăн усă курмалла, çĕнĕ меслетсем шырамалла.

Г. ДОЛОВ,
Суднăсем юсакан мастерскойри токарь-стахановец.

Поездсене расписани тăрăх илсе çӳретпĕр

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ чугун çул работникĕсем умне ответлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене ăнăçлă пурнăçласси—пирĕн хисеплĕ тивĕç.

Малта пыракан машинистсен опычĕпе усă курса, эпир нумай груз тиенĕ поездсене илсе çӳретес, топливо перекетлес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турăмăр. 1952 çулта нумай груз тиенĕ 28 состав илсе çӳретрĕм, нормăран иртерсе 7 пин тонна груз турттартăм. Пăравус чупассин талăкри хăвăртлăхне вăтам шутпа 47 километр, техникăллă хăвăртлăха пĕр сехет хушшинче 3,2 километр чухлĕ ӳстертĕмĕр, çĕр кăмрăкĕ чылай перекетлерĕмĕр.

Çак çитĕнӳсене мĕнле майпа тума пултартăмăр-ха? Эпир техникăна аван пĕлетпĕр теме пултаратпăр. Ĕçе тытăниччен пăравуса тимлĕн тишкерсе тухатпăр. Пăравуса юсаса пĕтернĕ хыççăн, механизмсем мĕнле ĕçленине сăнаса тăратпăр, пĕр-пĕр çитменлĕх пулсан ăна çийĕнчех пĕтерме тăрăшатпăр. Уйрăмах пăс машини çине тимлĕ пăхатпăр, мĕншĕн тесен юсав ĕçĕ хыççăн хăшпĕр чухне пăс машини йĕркеллĕ ĕçлемени пулкалать.

Эпир çакна лайăх пĕлсе çитрĕмĕр: пĕччен ĕçлесен малта пыракан меслетсемпе туллин усă курма май çук. Мăшăрлăн ĕçлекен машинистсем те хăйсен ĕçĕнче малта пыракан меслетсемпе усă курмалла, пăравуса аслă машинист пек ĕçлеттермелле. Çавăнпа эпĕ мăшăрлăн ĕçлекен машинистăн ĕçне сăнаса тăма тăрăшатăп, ăна канашсем паратăп, унпа ăмăртса ĕçлетĕп.

Январьпе февраль уйăхĕсенче нумай груз тиенĕ поездсем чылай илсе çӳретрĕмĕр, планран иртерсе икĕ пин тонна яхăн груз турттартăмăр.

Эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. 1953 çулхи нормăна срокчен тултарас тесе малашне хамăрăн ăсталăха тата ытларах ӳстерсе пыратпăр, машинăна юратса пăхатпăр.

К. СЕРЕБРЯКОВ,
Улатăр деповĕнчи аслă машинист.

Ĕçе механизацилеççĕ

Чугун çул транспорчĕнчи йывăç япаласем хатĕрлекен заводра материалсене тиесе пушатас ĕçе аллă вăйĕпе тунă. Çак йывăр ĕçе механизацилеме тата хăвăртлатма пулмасть-ши?—шухăшланă рационализаторсем.

Нумай вăхăт хушши тăрăшнă хыççăн вĕсем хăйсен тĕллевне пурнăçланă. Çĕнетсе тунă сушилка камери рабочисен ĕçне нумай çăмăллатнă, йывăç типĕтес ĕçе икĕ хут хăвăртлатнă.

Завод начальникĕ Ефимов инженер станина çинче сĕтел-пукан валли детальсем йышлăн хатĕрлес тĕллев лартнă. Ăна вăл ăнăçлă пурнăçланă. Инженер меслечĕ ĕç тухăçлăхне 35 процент чухлĕ ӳстерме, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме май парать. Вăл панă рационализаторла сĕнӳ çулталăкра вуншар пин тенкĕ перекетлеме пулăшать.

Заводра рационализаторсем чылай. Громилов механик иртнĕ çулта виçĕ сĕнӳ панă. Егоров, Чернышов, Новиков тата Ожигов рабочисем панă сĕнӳсен пĕлтерĕшĕ те пысăк.

Н. БОДРОВ,
Йывăç япаласем тăвакан заводри механизаци енĕпе ĕçлекен инженер.

* * *

Çамрăксем вĕренеççĕ

Пăравуссем юсакан завод цехĕсенче кунĕн-çĕрĕн хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Рабочисемпе работницăсем пилĕк çуллăх плана срокчен тата иртерсе тултарассишĕн вăя пелленсĕр тăрăшаççĕ.

Степан Горчаков комсомолец шкулта вĕреннĕ чухнех техникăна юратнă, унпа интересленнĕ. Вăл кăткăс станок çинче ĕçлеме ĕмĕтленнĕ.

Степан ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ. Вăл икĕ уйăх хушшинче фрезернăй станокпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕ, пысăк çитĕнӳсем турĕ, сменăри ĕç нормине куллен 200 процент ытла тултарса пырать. Цехра долбежниксем çитмен чухне Горчаков иккĕмĕш специальноçа вĕренме шутларĕ. Ватă производственник Ф. Годунов юлташ пулăшнипе вăл пĕр уйăх хушшинче çĕнĕ ĕçе вĕренсе çитрĕ, пысăк тухăçлăхпа ĕçлесе, паха продукци туса кăларма пуçларĕ.

Халĕ Степан Горчаков 1953 çулхи июнь уйăхĕ шучĕпе ĕçлет. Степан Горчаков тата заводри çĕршер ытти çамрăксем мĕншĕн-ха çавăн пек хастарлăн ĕçлеççĕ?

Çак ыйту çине В. Семенов токарь, 1952 çулта виçĕ çул нормине тултарнăскер, питĕ лайăх ответ пачĕ:

— Эпир хамăршăн, Тăван çĕршывшăн ĕçлетпĕр. Çавăнпа та пирĕншĕн ĕç чи пысăк савăнăç, пурнăçра чи кирли пулса тăрать.

Çак сăмахсем—чăн-чăн патриот сăмахĕсем!

Заводри А. Романовпа Ф. Коновалов токарьсем 1952 çулта тăватă çулхи ĕç нормине тултарчĕç. В. Яшин долбежник, Е. Фролов строгальщик халĕ 1953 çулхи иккĕмĕш çур çул шучĕпе ĕçлеççĕ.

Заводри ватă рабочисем—Иван Федорович Фадеев тата Константин Павлович Аникин токарьсем пурне те пример кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем сменăри нормăна 170—200 процент тултарса пыраççĕ, пысăк пахалăхлă продукци çеç туса кăлараççĕ.

Заводри ватă рабочисем çамрăксене вĕрентсе хатĕрлеççĕ, хăйсен опычĕпе паллаштараççĕ.

Ватă рабочисем пулăшнипе Е. Судленков слесарь, Ф. Казаков токарь производствăра малта пыракансем пулса тăчĕç.

Совет çыннин чи лайăх пахалăхĕ вăл—патриотизм. Пирĕн рабочисем — Тăван çĕршыв патриочĕсем. Вĕсем пирĕн пурнăç тата телейлĕрех те савăнăçлăрах пултăр, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçĕ тĕреклентĕр тесе ырми-канми ĕçлеççĕ.

Е. ПОПОВ,
Пăравуссем юсакан заводри инструментальнăй цехри мастер.

ИКШЕР НОРМА ТУЛТАРАÇÇĔ

Çак çулăн пуçламăшĕнче пăравуссем юсакан заводри ремонтпа механически цехри стахановецсем куллен икшер нормăран кая мар тултарса пыма социализмлă обязательство йышăннă. М. Родионов токарь, Н. Черенков фрезеровщик тата ыттисем те куллен икшер норма ытла тултарса пыраççĕ.

Н. Ждановпа П. Нефедов юлташсем ертсе пыракан слесарьсен бригадисем цехри пĕр станока февралĕн 28-мĕшĕ тĕлне куçарса лартма сăмах панă. Вĕсем хăйсен сăмахне виçĕ кун маларах пурнăçланă.

Цехри стахановецсем çак уйăхра тата тухăçлăрах ĕçлеме пулнă.

«СТАХАНОВЕЦ» хаçатран.

Хамăр республика тăрăх



Шупашкар. Картинăсен галлерейин çурчĕн аялти хутĕнче И. Кудрявцев скульпторăн мастерскойĕ вырнаçнă. Скульптор республикăри паллă çынсен бюсчĕсене тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Акă пирĕн чаплă землякăн, граждан вăрçи геройĕн В. И. Чапаевăн бюсчĕ. Ăна И. Кудрявцев питĕ ăста тунă. Кунтах чăваш совет литературин никĕсне хунă Çеçпĕл Мишшин бюсчĕ.

Халĕ скульптор Сталинла премия лауреачĕн Ф. М. Лукин композиторăн тата Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри вăйлă тырпул мастерĕн Н. Суров комсомолецăн бюсчĕсене тăвать.

Çак кунсенче И. Кудрявцев скульптора хăйĕн мастерскойĕнче ĕçленĕ вăхăтра «Поволжье» киножурнал валли ӳкерсе илчĕç.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Куйбышеври киностуди операторĕсем Н. Голубевпа Б. Тимкин юлташсем И. Кудрявцев скульптора ӳкерсе илеççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ПОЧТА КИЛСЕН

Елена Дюдеева комсомолка, сăран сумкине çакса, кашни кунах почта уйрăмĕнчен килет. Паян та Вăрманкас ялне çĕнĕ хаçат-журналсем, укçа перевочĕсем, посылка извещенийĕсем, çырусем нумай илсе килчĕ.

Эпир Дюдеевăпа колхоз клубĕнче тĕл пултăмăр. Клуба çынсем нумай пуханнă.

— Малашне почта илме лашапа каятăп,—тет Дюдеева юлташ клуба кĕрсе.— Почта сумкăна кĕми пулчĕ, йăтма та йывăрланчĕ. Хаçат-журналсем çырăнса илес текенсем татах та нумай.

— Пĕлесчĕ, кунне миçе çыру килет пирĕн колхоза?—тет пĕр ватă колхозник.

— Куллен 200 çыру. Вырăнти Советсен суйлавĕ тĕлĕнче тата ытларах килетчĕ. Кашни киле хаçат-журнал килсе тăрать. Февраль уйăхĕнче кăна колхозниксем 80 экземпляр хаçат тата 12 тĕслĕ журнал çырăнса илчĕç. Паян, акă, укçа перевочĕсем те нумай. Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе тăлăх хĕрарăмсем валли пирĕн яла кашни уйăхрах сакăр пин тенкĕ ытла пенси укçи килет. Трофимов ячĕпе В. И. Ленинпа И. В. Сталин Сочиненийĕсен пуххисен томĕсем килнĕ.

Çынсем паян килнĕ çырусене васкасах уçса вулама пуçларĕç. Ф. Степанов моряк, В. Андреев танкист, Павлов подполковник, Нохров капитан çырусем янă. Совет Çарĕнчен паян чылай çырусем килнĕ. Салтаксемпе офицерсем Тăван çĕршыва чĕререн юратни, пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем мире çирĕппĕн сыхлани çинчен çыраççĕ.

Пĕрисем çырусем вуланă вăхăтра колхозниксен тепĕр ушкăнĕ государство заемĕсен облигацийĕсене юлашки таблица тăрăх тĕрĕслет. «Тухнă!», «Выляв тухнă!» тесе калани илтĕнсе кайрĕ. Çамрăксем Спиридонова колхозница тавра пухăнчĕç. Ватă колхозницăн 100 тенкĕлĕх облигацийĕ çине 5 пин тенкĕ выляв тухнă. Колхозниксем пырса пăхаççĕ, тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕс. Сери номерĕ те, облигаци номерĕ те ларать.

— Манăн ачам-пăчам çук, 1.000 тенкине колхоза çĕнĕ клуб тума паратăп,—тет Спиридонова савăнчипе.

— Тĕрĕслер-ха, тен, мана та тухнă пулĕ. Иртнĕ çултанпа та тĕрĕслемен, — терĕ халĕ çеç клуба пырса кĕнĕ Павлов колхозник.

— Каллех 5.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Колхоз письмоносецĕ Е. Дюдеева хăй патне килнĕ çырупа паллаштарать. Вĕсен тăванĕ Ф. Дюдеев пилĕк çул каярах Чита облаçне куçса кайнă.

— Халĕ эпĕ колхозра ферма заведующийĕ пулса ĕçлетĕп,—тесе çырать вăл.— Иртнĕ çулта пĕччен ĕçлесех тырă чылай илтĕм. Кунти колхозсенче кашни ĕçкунĕ çине 2—3 килограмм тырă, 5—7 тенкĕ укçа валеçрĕç. Январь уйăхĕнче районти слĕтра пултăм, парне пачĕç. Кунта чăвашсем нумай. Çуркунне ман пата килсе курăр, кăмăл пулсан кунта юлма пултаратăр.

1952 çулта,—тесе çырать Калининград облаçĕнчен Мурлев юлташ хăйĕн ватă ашшĕ-амăшĕсем патне,—çемьепе ĕçлесе 153 пăт тырă илтĕмĕр. Колхоз пире валли çĕнĕ пӳрт лартрĕ тата ĕне илсе пачĕ. Эпир пуян та культурăллă пурăнатпăр. Çакăншăн Коммунистсен партине, аслă Сталин юлташа чĕререн тав тăватпăр.

— Эпир Карели вăрманĕнче ĕçлетпĕр, виççĕн ĕçлесе уйăхне 5 пин тенкĕ ытла илетпĕр. Ку укçа çиме те, тумланма та ытлашшипех çитет. Çак кунсенчех 250 тенкĕ укçа ярса паратăп. Карели—пуян край, çанталăк илемлĕ. Кунта пурăнма килĕр,—тесе çырать Ефейкин юлташ хăйĕн ачи патне.

Вăрманкас шкулĕнче 45 çул учитель пулса ĕçлекен Спиридонова патне ССР Союзĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен кашни кунах çырусем килсе тăраççĕ. Ватă учительница патне инженерсем, летчиксем, учительсем, рабочисем, колхозниксем çыраççĕ, хăйсене вĕрентсе çын тунăшăн тулли кăмăлпа тав тăваççĕ.

Çав вăхăтра тулта самолет кĕрлени илтĕнсе кайрĕ,— клубри ача-пăчасем урамалла тухса чупрĕç.

— Паян ирхине эпĕ Шупашкара васкавлă телеграмма яннăччĕ. Йывăр чирленĕ Капралов патне санитари самолечĕ врач илсе килчĕ,—терĕ Дюдеева.

— Лекци пуçланать. Кĕрсе вырнаçăр,—пĕлтерчĕç клубра. Колхозниксемпе колхозницăсем лекцие васкарĕç.

А. АФАНАСЬЕВ.

Çĕмĕрле районĕ.

* * *

Шкул коллективĕн чыслă ĕçĕ

Тĕрлемесри вăтам шкултан вĕренсе тухакансен хисепĕ çулсеренех ӳсе пырать. 1949 çулта X-мĕш класран 32 çамрăк вĕренсе тухнă пулсан, 1950 çулта 48 çамрăк вĕренсе тухнă. Кăçал 10-мĕш классенче 87 çын вĕренет. 1871 çулта çак шкулта пурĕ те 29 ача кăна вĕреннĕ пулсан, 1952 çулта 790 ача вĕреннĕ, кăçал та çавăн чухлех.

Шкул уçăлнăранпа вĕрентсе кăларнă çынсенчен халĕ 81 çын учитель, 39 çын агроном пулса ĕçлеççĕ. 20 çын бухгалтер, 13 çын врач пулса, 10 çын юстици енĕпе тата ытти организацисенче те ĕçлеççĕ. 38 çын Совет Çарĕн офицерĕсем, 92 çын аслă шкулсенче, 19 çын—техникумсемпе училищĕсенче вĕренеççĕ.

Çакă—шкул коллективĕн чыслă ĕçĕ.

В. ПЕТРОВ,
К. СЕЧНОВ.

Куславкка районĕ.

Самообложени укçине пухса пĕтернĕ

МУРКАШ. Йӳçкасси ял Советĕнче ялхуçалăх налогне пухас ĕç ăнăçлă пырать. Самообложени укçине пухас ĕçе те лайăх йĕркеленĕ.

Нумаях пулмасть ял Советне кĕрекен ялсенче ĕçсыннисен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пухусенче ял Совет председателĕ А. Димитриев юлташ иртнĕ çулхи самообложени укçипе мĕнле усă курни çинчен отчет туса пачĕ. Колхозниксемпе ĕçсыннисем, ял Совечĕн ĕçне тишкерсе тухнă хыççăн, кăçал самообложени укçипе мĕн тумаллине палăртса хăварчĕç.

Ял Совечĕ çулсерен самообложени укçипе тĕрĕс усă курать. Юлашки икĕ çул хушшинче самообложени укçипе Илпеш шывĕ урлă 27 метр тăршшĕ çĕнĕ кĕпер, ял Совет территорине кĕрекен ялсенче 8 çăл тунă. Çавăн пекех вăтам шкул çуртне, ялти больница çуртне тата ял Совет канцелярине юсама укçа панă.

Ял Советĕнче кăçалхи самообложени укçине пĕтĕмпех пухнă.

П. ЯКОВЛЕВ.

Пахча çимĕçрен 31 пин тенкĕ тупăш

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Андреев ячĕпе тăракан колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă пахча çимĕç туса илет. Пахча çимĕç бригадин бригадирĕ пулса опытлă колхозник И. Сидоров нумай çул хушши ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне мичуринла агробиологи науки кăтартнă пек туса пырать. Çавна май бригада 1952 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 477 центнер хăяр, 299 центнер кишĕр, 246 центнер помидор, 223 центнер купăста, 59 центнер суханпа ыхра туса илнĕ.

Колхоз государствăна пахча çимĕç памалли плана ăнăçлăн тултарчĕ, 31 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Бригада халĕ çитес çуркуннене хатĕрленет: парник хуçалăхне çирĕплетет, пахча çимĕç участокĕ çине тислĕк кăларать, вăрлăхсене сортласа шăтас пахалăхне тĕрĕслет. Бригада членĕсем агрокурсра вĕренеççĕ. **В. ЧОБАЙКИН.**

Автокружок

ÇĔРПӲ. Ялхуçалăх техникумĕнче автокружок ĕçлеме пуçларĕ. Унта 20 студент вĕренет. Занятисем уйрăм програма тăрăх каçхине пулса иртеççĕ. Кружока техникумри преподаватель инженер-механик А. В. Патрикеев юлташ ертсе пырать. Кружокра вĕренекенсем çак кунсенче «Проезд перекресток» тата «Карбюратор» ятлă кинофильмсем курчĕç.

Г. КРАСНОВ.

Китайри аслă канал

(Китайран килнĕ çыру)

Китайри аслă канал Ханчжоу хулинчен пуçласа Китай столицине—Пекина çитиччен тăсăлса выртать. Вăл тăватă пысăк провинцие: Чжэцзян, Цзянсу, Шаньдун тата Хэбей провинцийĕсене пĕрлештерет. Канал тăршшĕ пин километр ытла.

Авалхи сооруженин хăйĕн нумай ĕмĕрхи историйĕ пур. Каналăн Цзянсу провинцийĕнчи Тайчжоупа Хаймэнь хушшинчи пĕрремĕш сыпăкне пирĕн саманаччченхи улттăмĕш ĕмĕрте чавнă. «Тăвар турттармалли юханшыв»—тенĕ ăна патша килĕнчи çынсем. Вĕсем тăварпа сутуилӳ тумалли монополие хăйсен аллинче тытса тăнă, çак монополие хирĕç пыма хăтланнă çынсенне пуринне те пуçĕсене касса татнă.

Ĕмĕрсем иртнĕ. Цзянсури канал тăрăх тăвар турттарасси вăйланнă. Ăна кăнтăр еннелле тата ытларах вăрăмлатмалла пулнă. Пирĕн саманари çиччĕмĕш ĕмĕрте вăл Янцзы сыранĕ урлă каçса Ханчжоу патне çитнĕ. Вунтăваттăмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче канала çурçĕр енне Пекина çитиччен вăрăмлатнă.

Китайри аслă канал Китай патшисене кăнтăрти провинцисенчен паха йышши ялхуçалăх продукчĕ—рис йӳнĕ хакпа турттарса кăларма тата ăна çурçĕрте виçĕ хак ӳстерсе сутма кирлĕ пулнă. Император килĕн рис монополийĕ вăйланма пуçланă. Пусмăрçăсем ытах та сĕмсĕрленме пуçланă, вĕсем рис тăвакансемшĕн нимĕн чухлĕ те тăрăшман. Канал тăрăх суднăсем йĕркеллĕ çӳретмелле тăвас тĕллевпе пусмăрçăсем питĕ нумай çĕре тата çĕршер пин хресченсен пурнăçне нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтернĕ.

1855 çулта Китайра пысăк инкек пулнă. Хуанхэ юханшывĕ Тунвасян районĕнче пĕвене татса кайнă. Çакăн хыççăн Хуанхэ юханшывне юхса кĕрекен Хуайхэ юханшывĕн тинĕсе тухмалли çулĕ питĕрĕннĕ, вăл канала юхса кĕме пуçланă. Император çывăхĕнчи çынсем канала юханшывран пӳлсе лартма васкавлăн дамба тума хушнă. Çапла вара ăна татăклăнах питĕрсе лартнă. Çапла пулса тăнă Аньхойпа Цзянсу провинцийĕсен чиккинчи питĕ пысăк Хунцзеху кӳлли тата темиçе çĕршер километра тăсăлса выртакан сиенлĕ шурлăхсем. Унтанпа Хуайхэ юханшывĕн бассейнĕнче пурăнакан утмăл миллион хресчен çумăрсем вăхăтĕнче пурне те шыв илсе пĕтерекен хăрушлăхра пурăннă.

Китая империалистла çăткăнсем пырса кĕни, Китай милитарисчĕсем пĕр-пĕринпе вăрçса пурăнни, гоминдан çыннисем иртĕхни çĕршывăн хуçалăхне татăклăнах аркатнă. Çынсен шăмми çинче туса хунă çак аслă шыв каналне пăрахăçа кăларнă, вăл çултан-çул юхăнса пынă. Хуайхэ шывĕ айне пулса миллионшар çынсем пĕтнĕ. 1931 çулта Хуайхэ бассейнĕнче шыв тулнипе 20 миллион хресчен сиен курнă. 1938 çулта кунта 500 пин çын путса вилнĕ, 6 миллион çын ытла килçуртсăр тăрса юлнă. Хресченсем 1949 тата 1950 çулсенче те пысăк сиен курнă...

— Хуайхэне мĕнле пулсан та чармалла! — Китайра халăх революцийĕ çĕнтернĕ хыççăнах Китай халăхĕн çулпуçĕ Мао Цзэ-дун çакăн пек чĕнӳ кăларса тăратнă. Вăл чĕнсе каланине çынсем хапăл туса йышăннă. Хуайхэ юханшывĕнчи ĕçсем—авалхи ирригаци сооруженине—Китайри аслă канала çĕнетмелли ĕçсен пуçламăшĕ пулса тăнă.

Иртнĕ çул эпир çурхи шывпа тулнă Янцзы юханшывĕ урлă каçса каналăн вăтам пайне пырса кĕтĕмĕр. Янцзыпа Хуанхэ хушшинче паян пысăк ĕçсен фрончĕ сарăлса пырать. Вуншар пин çын канал тăрăх çĕнĕ дамбăсем тăвать. Шывсем тăрăх çĕршер кимĕ çӳрет, вĕсем чул, хăйăр, цемент, арматура тата ытти строительство материалĕсем турттараççĕ.

Çыранăн сылтăм енче те, сулахай енче те дамбăсен айккине, канал урлă карнă пирсем çине: «Хуайхэне мĕнле пулсан та чармалла!», «Мао Цзэ-дуна мухтав!», «Çĕнĕ Китай тума пулăшакан совет çыннисене тав!», «Плана срокчен тултарни—мир ĕçне кӳнĕ парне!» тесе çырса хунă сăмахсем курăнса тăраççĕ.

Хейлоба ялĕнче эпир канал çинче ĕçлекен хресченсен пĕр ушкăнĕпе калаçрăмăр. Иртнĕ кунсем çинчен каласа, вĕсем хăрушă фактсем илсе кăтартаççĕ. 1855 çултан пуçласа 1931 çула çитиччен халăха хирĕçле влаçсем юри дамбăсене пăсса 16 хутчен пысăк территорине шыв тултарттарнă. Шыв пĕве хĕррине çитиччен тулса çитсен, вăл пуянсен çĕрĕсем çине кĕрлесе кĕрес хăрушлăх тухса тăрсан, пуянсем дамбăна хресченсен анисем тĕлĕнче тата-тата янă, çапла вара вĕсене пысăк сиен кӳнĕ. Влаçа алăра тытса тăракан çынсем çĕмĕрсе тăкнă сооруженисене юсама тăрăшман.

Паян Хейлобăра халăх влаçĕсем ертсе пынипе тата совет специалисчĕсем-ирригаторĕсем пулăшнипе çĕнĕрен темиçе километр тăршшĕ дамбăсем, шыв тулнине йĕркелесе тăмалли шлюзсем тунă, уйхирсене шăвармалли каналсем чавнă. Çаксене пурне те Мао Цзэ-дун чĕнсе каланипе аслă стройкăна тухнă хресченсен аллипе тунă.

Çĕршер пин хресченсем хушшинче ĕç хастарлăхĕ çĕкленсе пыни çинчен Дин Ли-фу бригадир çапла каласа парать:

— Эпир ĕç вăйĕ çитменнине туймастпăр. Ĕçлес текенсем питĕ нумай. Ĕçлеме кашни ял валли çирĕп черет туса хумалла пулчĕ. Мĕншĕн? Шыв тулни Китай хресченĕсемшĕн питĕ пысăк инкек пулнă. Çирĕм пилĕк çул каялла эпĕ çуртсăр, хуçалăхсăр, аттепе аннесĕр тăрса юлтăм. 1931 çулта шыв айĕнче арăмпа ачасене çухатрăм. Çакăн пек пĕр эпĕ кăна мар инкек курнă. Пирĕн ялта 1931 çулхине икĕ пин çын ытла шыва путса вилнĕ. Провинцири ытти ялсенче те вуншар пин чухăн хресченсем пĕтнĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Мао Цзэ-дун «Хуайхэне мĕнле пулсан та чармалла!» тесе каланине миллионшар хресченсем чĕререн хапăл туса йышăнчĕç.

Канал тăрăх ишсе пынă чухне чăннипех паттăр ĕç куратăн. Вунпилĕк пин хресчен Баоин уездĕнче çĕре шăвармалли шлюзсем тунă çĕрте ĕçлеме тухнă. Вĕсене пулăшма Шанхайран 120 рабочи килнĕ. Вĕсем хăйсемпе пĕрле тимĕр конструкцисем, электро тата мото-двигательсем, çĕре пăраламалли аппаратсем илсе килнĕ. Анчах вĕсем илсе килнисенчен чи пахи вăл ĕçĕн малта пыракан меслечĕ—производствăллă ăмăрту пулса тăрать.

Пăртак инçетерех пин çурă—икĕ пине яхăн симĕсрех тĕслĕ гимнастерка тăхăннă çамрăксем ĕçлеççĕ. Вĕсем мухтавлă ĕç армеецĕсем. Алла кĕреçе, кирка, катмак, тачка, корзинка тытса боецсем дамба тăваççĕ, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕн наступленине тытса чарас шутпа пилĕк çул каялла гоминдан çарĕсем сирпĕнтерсе янă канал дамбине тăваççĕ.

«Халăхăн мухтавлă ывăлĕсене—Мао Цзэ-дун председательпе Чжу Дэ мухтавлă салтакĕсене салам!»—тесе çырнă Баоин ялне пырса кĕнĕ çĕрте çул урлă карса çакнă пысăк плакат çине. Çакăн пек сăмахсене ытти нумай вырăнсенче те курма пулать. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕ Чан Кай-ши бандине çĕмĕрсе тăкнă хыççăн халĕ вăрçă кӳнĕ суранcене сиплеме халăха паттăррăн пулăшать.

Мĕн чухлĕ çурçĕр еннелле пыратăн, çавăн чухлĕ çутçанталăк вăйĕсене хирĕç наступлени туса пыракан вĕçĕмсĕр фронтăн сăн-сăпачĕ куç умне анлăрах тухса тăрать. Акă Хунцзеху кӳлли. Вăл канал дамбисем патне хĕвеланăç енчен нумай вуншар километр хушши пырса тухать. Хунцзеху сăмах вĕçĕмсĕр хĕн-хурпа инкеке пĕлтерекен сăмах пулса тăнă. Шыв тулнă вăхăтра кӳлĕри шыв канал дамбисем урлă юхса каçнă, пĕр самантра дамбăсене йăвантарса янă, унăн кĕрлесе тăракан хумĕсем хăйĕн çулĕ çинче тĕл пулакан мĕнпур япалана хăйпе пĕрле хĕвелтухăçне—тинĕсе юхтарса кайнă.

Çак картинăна курнă çынсем ун çинчен хăрамасăр, сехĕрленмесĕр аса илме пултараймаççĕ. Калăпăр, тăватă метр çӳлĕш, вуншар километр сарлакăш шыв хумĕ юхса пырать, вăл хресченсен тăмран туса лартнă çурчĕсем çине, атакăна тухнă утлă çар хăвăртлăхĕпе, тапăнса пырать. Хум пĕрре пырса çапнипе тăм пӳртлĕ çĕршер ялсене хăйĕн çулĕ çинчен шăлса ывăтать. Çынсем йывăç çине хăпарса хăтăлса юлма шутланă, анчах йывăçсем те тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлса шыва путнă. Телейлĕрех хисем çеç пĕр-пĕр çӳлĕ вырăна пырса çитсе çăлăнса юлма пултарнă. Анчах кунта вĕсене тепĕр инкек—выçлăх кĕтсе тăнă.

Эрнесем иртнĕ, анчах ахăрса тăракан шыв август уйăхĕн вĕçĕнче—сентябрьте кăна чакма пуçланă. Çӳлĕ вырăнсем çинче выçăпа вилнĕ çынсен ӳчĕсем выртса юлнă. Гоминдан правителĕсем йихçан та хресченсене хăтарма тăрăшман. Тата та ытларах. Вĕсем хресченсен инкекĕпе пуйнă. Çӳлĕ вырăнсем патне улпутсен кимĕсем ишсе пынă. «Доллар паратăн, вара хăтаратăп» тенĕ вĕсем. Анчах чухăнсен укçа пулман. Вара улпутсем çынсен юлашки ăпăр-тапăрне çаратса, вĕсене вилĕм умне тăратса хăварнă...

Çаксем пурте ĕнтĕ халĕ кая юлчĕç. 1950 çулхи кĕркунне эпĕ Аньхой провинцийĕнче шыв тулнă вăхăтра пултăм. Влаçăн халăх органĕсем кăларнă приказ тăрăх сиен курнă хресченсене пулăшма Янцзы çыранĕсем хĕрринчен, Шанхайран, Тяньцзинрен, çĕршывăн тата ытти районĕсенчен пиншер кимĕсем килнĕ. Вĕсем врачсем, рис, тумтир, медикамент, строительство материалĕсем илсе пынă. Вуншар самолетсем çӳлĕ вырăнсем çинче, утравсем çинче, сăртсем çинче хăтăлса юлнă çынсене апатсем пăрахса панă. Промышленность центрĕсенче ĕçлекенсем дамбăсене хăвăртрах юсама баржăсемпе катерсем çине механизмсем тиесе килнĕ.

Икĕ çул иртрĕ. «Хуайхэне мĕнле пулсан та чармалла!» тесе Мао Цзэ-дун чĕнсе каланă сăмахсем пурнăçа кĕнĕ ĕçсем пулса тăчĕç. Вĕçĕмсĕр хĕн-хур кӳнĕ Хунцзеху кӳлли халĕ ĕнтĕ этеме итлет кăна мар тата ăна усă кӳрет. Кӳлĕрен Сарă тинĕс патне 170 километр тăршшĕ канал чавса кайнă. Вăл канал Хуайхэ шывĕ тулса çитме пуçласан, кӳлĕ шывне пĕтĕмпех тинĕсе юхтарса кăларма пултарать.

Хуайхэ бассейнĕн ту вĕçĕнче пысăк водохранилищĕсем туса хунă. Çĕнĕ шлюзсем çурхи шывсене чарса тăраççĕ. Шлюзсене юханшыв чакса çитсен кăна, ун тăрăх çулталăк тăршшĕпех суднăсем çӳремелле тума, уçаççĕ.

Текех тăвăллă та хăрушă Хуайхэ çук! Пăрахăçа кăларнă, япăхтарнă аслă канал, çĕршер çулсем хушши кулă-бурлаксен чуна çуракан сассисем илтĕнсе тăнă канал, Китайри мухтавлă Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан халăх ирĕкĕпе, халĕ çĕршывăн пысăк та хăватлă шывçулĕ пулса тăчĕ. Вăл миллионшар ирĕклĕ çынсене пурнăçпа телей кӳрет.

И. ВЫСОКОВ.

Демократиллĕ Германи Республики. Берлин хулинчи Сталин ячĕпе тăракан аллейăра ĕççыннисем валли пурăнмалли çĕнĕ çуртсем нумай лартаççĕ. 1953 çулта 1.400 хваттер, икĕ шкул, нумай магазинсем, культурăпа йăла учрежденийĕсем туса пĕтереççĕ. Берлин хулинчи заводсемпе фабрикăсенче ĕçлекен рабочисем, производствăри активистсем тата интеллигенцин чи лайăх представителĕсем çĕнĕ хваттерсене пурăнма куçаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталин ячĕпе тăракан аллейăри пурăнмалли çĕнĕ çуртсем лартакан участоксенчен пĕри.

ЦЕНТРАБИЛЬД фотоӳкерчĕкĕ.

Вырăс çарĕсем Болгарие Турци пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăранпа 75 çул тултарнă

СОФИЯ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 3-мĕшĕнче вырăс çарĕсем Болгарие Турци пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăранпа 75 çул тултарать. Пур хаçатсем те вырăс çарĕсем 1877—1878 çулсенче Турци çарĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешни çинчен тата Болгари халăхĕ хăйĕн çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешни çинчен калакан нумай материалсем пичетлесе кăларнă.

Çĕршыва ирĕке кăларнăранпа 75 çул çитни çинчен вулав çурчĕсенче калаçусемпе лекцисем ирттереççĕ. Стара-Загора хулинчи халăх музейĕнче вырăс çарĕсем Болгарие ирĕке кăларнă ятпа выставка уçăлнă. Çак хула патĕнче ĕлĕк уйрăмах вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Выставкăна хĕçпăшалсем, фотоӳкерчĕксем, карттăсем, документсем тăратнă. Болгарири наука академийĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев музыка институчĕ çак уяв ячĕпе халăх юррисен пуххине кăларнă. Вăл юрăсем Российăпа Турци хушшинчи вăрçă ĕçĕсене, çавăн пекех Совет Çарĕ Болгарие ирĕке кăларнине кăтартаççĕ.

Болгари Турци пусмăрĕнчен ирĕке тухнăранпа 75 çул тултарнă ятпа пĕтĕм çĕршывра эстафета пулса иртет. Эстафетăна пиншер хĕрачасемпе арçын ачасем хутшăннă. Вĕсем вырăс çарĕсемпе Болгари ополченецĕсем туроксене хирĕç çапăçнă вырăнсем тăрăх иртеççĕ.

Китайра суйлав çинчен кăларнă закон

ПЕКИН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх правительствин Председателĕ Мао Цзэ-дун халăх представителĕсен Пĕтĕм Китайри пухăвне тата халăх представителĕсен вырăнсенчи ытти мĕнпур пухăвĕсене суйламалли закон вăя кĕни çинчен пĕлтернĕ. Çак суйлав законне 1953 çулхи февралĕн 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ Центральнăй халăх правительстви Совечĕн 22-мĕш ларăвĕнче йышăннă.

Çутçанталăк пуянлăхĕсене тупса палăртаççĕ

ПЕКИН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Халăх Китайĕ» журналта Гао Си-шань статьине пичетлесе кăларнă. Статья — «Китай хăйĕн çутçанталăк ресурсĕсене эксплуатацилеме тытăнать» ятлă.

Китай Халăх Республикине туса хуни тата экономика строительстви вăйланса пыни, тенĕ статьяра, геологи ĕçĕсем енĕпе пысăк малашлăх уçса пачĕ.

Британи энциклопедийĕнче, тесе çырать автор, çапла каланă: Шаньси провинцийĕнче кăна хальхи вăхăтри нормăсем тăрăх пĕтĕм тĕнче валли темиçе пин çуллăха çитмелĕх çĕр кăмрăкĕ пур. Китай тимĕр тăпри, пăхăр, тăхлан, сурьма, ртуть, ылтăн тĕлĕшĕнчен пуян. Хунаньри сурьма рудникĕсем пĕтĕм тĕнчене паллă пулнă. 1937 çулччен тĕнчере кăларакан пĕтĕм сурьмаран 70 процентне çав рудниксем панă. Ун чухне Китай тĕнчере кăларакан пĕтĕм вольфрамран 60 процентне кăларнă.

Анчах çак кивелнĕ сведенисем, тесе палăртать автор, хальхи Китайăн чăнчăн пуянлăхне нимĕн чухлĕ те палăртмаççĕ. Вĕсем ытла та кивелнĕ. Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра кăна çĕр кăмрăкĕ малтан шутланинчен 10 хут ытларах. Çĕр кăмрăкĕ кăларакан Цзяньси районĕнче çĕр кăмрăкĕн пысăк запасне тупса палăртнă. Ку кăмрăк Центральнăй кăнтăр Китай промышленноçĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăн пекех çĕр кăмрăкĕн пысăк запасĕсене Вэй юханшыв районĕнче (Шэньси провинцийĕ) тупнă.

Пысăк пахалăхлă тимĕр тăпри кăлармалли вырăнсем нумай тупнă. Америка монополисчĕсем Китайра нефть çук тесе çине тăрса сăмах сарнă. Халĕ çак суя сăмаха та сирсе пăрахнă. Виçĕ çул хушши геологи ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн нумай вырăнсенче çĕр айĕнче нефть пуррине палăртнă.

Геологи ĕçĕсем вĕçĕмсĕр вăйланса пыраççĕ. Государство çак ĕç валли укçа-тенкĕ нумай хывать. 1953 çулта геологи ĕçĕсене 10 хут пысăкрах çĕр лаптăкĕ çинче туса ирттереççĕ.

Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Союзĕн Центральнăй Комитечĕн ларăвĕ

ПРАГА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 1-мĕшĕнче Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Союзĕн Центральнăй Комитечĕн ларăвĕ хупăннă.

Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Союзĕн ялсенчи пуçламăш организацийĕсен ĕçĕсем çинчен Союзăн Словакири комитечĕн секретарĕ С. Фальтан пĕлтернĕ. Вăл Союзăн ялсенчи пуçламăш организацийĕсен йышĕ ӳсние палăртнă. Хальхи вăхăтра пуçламăш организацисем 10.600 ытла шутланаççĕ, вăл шутран: Чехинче—7.445, Словакире—3.194 пуçламăш организаци шутланать. Юлашкинчен докладчик Союзăн ятта ĕçлес тĕлĕшпе тăракан малашнĕхи задачисене палăртнă.

ПОЛЬШĂРА ÇАМРĂК СПЕЦИАЛИСТСЕМ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

ВАРШАВА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикинчи аслă шкулсенчен çамрăк специалистсен тепĕр ушкăнне вĕрентсе кăларнă. Кăçал аслă шкулсенчен вĕренсе тухса 29.300 пин çын диплом илнĕ. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 35 процент ытларах пулать. Вăрçăччenхи Польшăра 1937 çулта çĕршыври тата ют çĕршывсенчи аслă шкулсенчен вĕренсе тухса диплом илнисем пурĕ те 6 пин çын ытларах кăна пулнă.

Краков хулинчи сăрт-тупа металлурги академийĕ кăçал сăрт-тупа металлурги промышленноçĕ валли Польшăра 1937 çулта вĕрентсе кăларнинчен 9 хут ытларах специалистсем вĕрентсе кăларнă.

Кăçал аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисенчен ытларахăшĕ — рабочисемпе хресченсен ачисем. Çамрăк специалистсем металлурги завочĕсенче, шахтăсенче, ялхуçалăхĕнче, çĕрĕç кооперативĕсенче тата ытти предприятисенче ĕçлеме тытăннă.

АЛБАНИРЕ ВИÇÇĔМĔШ ГОСУДАРСТВЕННĂЙ ЗАЕМ ПЫСĂК ĂНĂÇЛĂХПА САРĂЛАТЬ

ТИРАНА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Албани Халăх Республикин Экономикăпа культурăна аталантармалли виççĕмĕш государственнăй заемне вырнаçтарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳ тунă ятпа паян хаçатсем васкавлă номерсем кăларнă. Хаçатсем заем сарас ĕçĕн малтанхи итогĕсем çинчен Финанс министерстви пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, малтанхи кунах заема 410.457.050 лек сарнă. Ку вăл заем сарма малтанлăха палăртнинчен 10,5 миллион лек ытларах пулать.

ВЬЕТНАМ ХРЕСЧЕНĔСЕН ПАТРИОТЛА ПУÇАРĂВĔ

ШАНХАЙ, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнамри информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вьетнам халăх республикинчи хресченсем ялхуçалăх производствине ӳстерессишĕн ăмăрту пуçарнă.

Хресченсем тырпул тухăçлăхне правительство 1953 çул валли кăтартса панă планран ирттерсе вăтам шута 10 процент ӳстерме обязательствăсем йышăнаççĕ.

Тăшман авиацийĕ тапăнса ирригаци сооруженийĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ районсенче уйсене шăварма пысăках мар каналсемпе пĕвесем тума тытăннă. Нон-Конг тата Тань-Хоа районĕнче январь уйăхĕнче 645 пысăках мар пĕве тунă, çакна пула 17 пин мау çĕре шăварса тăма пуçланă (пĕр гектар—2,7 мауна яхăн).

Ветеринари врачĕн канашĕсем

Шăшисемпе йĕкехӳресене пĕтерĕр

Халăх хуçалăхне уйрăмах пысăк сиен кӳрекен чĕрчунсен шутне шăшисемпе йĕкехӳресем кĕреççĕ. Тăтăшах кĕрешмесен, вĕсем çулсерен пиншер центнер тĕштырă, тымарçимĕç, улма-çырла, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем пĕтерме пултараççĕ. Вĕсем час-часах промышленность таварĕсене те юрăхсăр кăлараççĕ. Шăшисемпе йĕкехӳресем питĕ хăвăрт ĕрчеме пултараççĕ.

Пурăнакан çуртсенче, складсенче тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче йĕкехӳресенчен хытă асăрханас пулать. Вĕсем нимскере те тиркесе тăмаççĕ, тĕштырăсене çисе тата пăсса пурăннипе пĕрлех, пахчари, уй-хирти çимĕçсене те сăтăр тăваççĕ, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк çине те тапăнаççĕ. Ӳссе çитнĕ çĕршер кайăк-кĕшĕке, пиншер чĕпĕсене йĕкехӳресем тытса ватса пĕтернисем тĕл пулаççĕ. Йĕкехӳресем çавăн пекех чир-чĕрсем те сараççĕ.

Пирĕн вырăнсенче шушка-кăвак — пасюк текен йĕкехӳре нумай. Условисем лайăх пулсан, вăл çулталăкĕпех ĕрчет, пĕр мăшăртан çулталăк хушшинче 800 йĕкехӳре таран пулма пултарать. Пĕр йĕкехӳре çулталăкра вара 40—60 килограмм тĕрлĕ продукт çисе ярать.

Илсе кăтартнă тĕслĕхсенчен çакна курăтпăр: йĕкехӳресемпе шăшисене тăтăшах пĕтерсе пыни халăх хуçалăхĕшĕн питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать, ку ĕçе хакламасăр тăни пулмалла мар.

Хуçалăха сиен кӳрекен çав чĕрчунсене хăвăртрах пĕтерсе пырас тесен, чи малтан, вĕсене ĕрчеме чарас пулать. Сăмахран, апат пулмасан шăшисемпе йĕкехӳресем нумай пурăнаймаççĕ, апат кирлинчен çурри çеç пулсанах ĕрчеме пăрахаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ апат-çимĕçе йĕкехӳресемпе шăшисем кĕме пултарайман вырăнта тытма тăрăшмалла.

Çурт-йĕрсем таса пулмалла, унта çӳп-çап, кирлĕ мар япаласем тытма юрамасть. Урайне çĕрĕп япаласенчен тумалла, шăтăксем курăнма пуçласанах, вĕсене кĕленче ванчăкĕсемпе хутăштарса цементпа питĕрмелле. Служба валли лартакан çурт-йĕрсен никĕсне кирпĕчрен, чултан е шлакпа бетонран тусан аван.

Шăшисемпе йĕкехӳресене çине тăрсах пĕтерсе пымалла. Вĕсене тапăсемпе, капкăнсемпе тытмалла. Çав сиен кӳрекен чĕрчунсене тата химилле майпа та пĕтереççĕ. Ку тĕлĕшпе углекислăй барипе, фтористăй натрипе, цинк фосфичĕпе, фосфорпа, наркăмăшпа тата «Крысид» препаратпа усă кураççĕ.

Наркăмăшлă япаласене йĕкехӳресемпе шăшисене çăнăхпа, сăсăлпа, пăтăпа, çăкăрпа, пулă-аш таврашĕпе тата ытти продуктсемпе те хутăштарса параççĕ. Анчах та вăл продуктсем çĕрĕк ан пулччăр, çавăн пекех кăвакарса пăнтăхнисем те юрамаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене йĕкехӳресем пырса тĕкĕнмеççĕ.

Тĕрлĕ продуктсенчен туса хатĕрлекен япаласенче углекислăй бари 8—10 процент, фтористăй натри 12—15 процент, цинк фосфичĕ 3—5 процент, фосфор 2—3 процент, наркăмăш 8—10 процент, «Крысид» препарат 0,5—1 процент пулмалла. Çавăн пек хатĕрленĕ япаласене шăшисемпе йĕкехӳресем лайăх çиччĕр тесе, вĕсене кăштах мĕнле те пулин ӳсентăран çăвĕне хутăштармалла. Наркăмăшланă япаласене 1,5—2 грамм турткан, «Крысид», препаратпа тунă япалана 0,5—1 грамм туртакан татăксем туса параççĕ. Вĕсене килти выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк пырса тĕкĕнме пултарайман, йĕкехӳресем çеç çӳрекен вырăнсене хурса тухмалла. Наркăмăшлă татăксене шăтăк-çурăка алăпа мар, пĕр-пĕр япалапа илсе хурас пулать, çын алли тĕкĕннĕ япалана йĕкехӳресем çимеççĕ. Наркăмăшлă япаласенчен туса хатĕрленĕ татăксене хурса тухиччен пӳрт-çуртран тĕрлĕ апат-çимĕçе, выльăх апатне, çавăн пекех шыва та урăх çĕре куçармалла.

Шăшисемпе йĕкехӳресене химилле майпа пĕтерме уйăрнă çынсен асăрханулла пулмалла, мĕншĕн тесен маларах асăннă тĕрлĕ наркăмăшсенчен тунă япаласем йĕкехӳресемпе шăшисемшĕн çеç мар, выльăх-чĕрлĕхпе çынсемшĕн те сиенлĕ.

Йĕкехӳресемпе шăшисене химилле майпа наркăмăшлă мар япаласемпе те пĕтереççĕ. Çакăн пек хутăшсене кăтартса парăпăр: сӳнтермен известь порошокĕн 5 пайне 3 пай çăнăхпа тата 2 пай сахăрпа хутăштараççĕ; известь порошокне çурмалла салатпа хутăштарсан та аван; пилĕк пай гипс, виçĕ пай çăнăх, икĕ пай сахăр хутăштарсан та лайăх хутăш пулать т. ыт. те. Çав асăннă хутăшсене типĕлле параççĕ, вĕсене пăрахса панă çĕрте кирлĕ мар савăт-сапана шыв ярса лартас пулать. Шăшисемпе йĕкехӳресем çинĕ хыççăн шыв ĕçеççĕ те вар-хырăм аптранипе вилсе пĕтеççĕ.

Шăшисемпе йĕкехӳресене ытти майсемпе те пĕтереççĕ.

Халăх хуçалăхне пысăк сиен кӳрекен йĕкехӳресене тата шăшисене пĕтерес ĕçе районсенчи ялхуçалăх пайĕсенче ĕçлекенсен, медицинăпа ветеринари, хатĕрлев тата суту-илӳ организацийĕсем çине тăрса организацилемелле.

М. ГУНДОРОВ,
ветеринари врачĕ.

Корейăри ĕççем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе çапăçнă.

Тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Америка агрессорĕсем Корейăри мирлĕ халăха тискеррĕн пĕтереççĕ

ПХЕНЬЯН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем çаплах Çурçĕр Корейăн хĕвелтухăçпа хĕвеланăç çыранĕсенчи хуласемпе ялсем çине тискеррĕн тапăнаççĕ. Уйрăмах Вонсан порчĕпе унăн çывăхĕнчи ялсем çине хытăн тапăнаççĕ. Корейăри Тĕп телеграф агентстви хăйĕн корреспонденчĕ Вонсанран пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: февралĕн 23-мĕшĕ умĕн çĕрле Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши йывăр бомбардировщикĕсем Вонсан районĕ çине, Аньбьен уездĕнчи мирлĕ ялсем çине 280 фугаслă тата напалмлă бомба пăрахнă. Унччен кăнтăрла та авианосецсем синчен вĕçсе хăпарнă самолетсем çак вырăнсем çине пырса тапăннă пулнă. Çĕрле çавăн пек тискеррĕн тапăннине пула хĕрарăмсем, ачасем, ватă çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай пулнă. Хресченсен 120 çуртне ишĕлтерсе тата çунтарса янă. Çав кунах Америкăн çар карапĕсем темиçе сехет хушши тинĕс енчен Вонсан районĕ çине тупăсенчен персе тăнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем, уйрăмах ачасем хушшинче, нумай пулнă. Çĕршер землянкăсемпе ытти пурăнмалли хуралтăсене çунтарса янă. Вонсанра пурăнакансем Америка интервенчĕсен тискер ĕçĕсене хирĕç хытă тарăхса протестлеççĕ.

Инди халăхĕ США-н Азири агрессиллĕ политикине сивлет

ДЕЛИ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Инди парламенчĕн сессийĕнче президент тухса каланă тăрăх пулса иртнĕ пренисем çакна кăтартаççĕ: тĕрлĕ партисен фракцийĕсен нумай ораторĕсем США Инçет Хĕвелтухăçĕнче тытса пыракан агрессиллĕ политикăна хытă сивлеççĕ. Влаçра тăракан парти депутачĕ Б. Синха çапла каланă: Азири халăхсем икĕ ĕмĕр хушши хĕвеланăçĕнчи державăсен пусмăрĕнче пурăннă. «Хĕвеланăç» текен сăмах,— тенĕ Синха,— пирĕн ăнланура политикăллă пусмăра тата этем прависене шута хуманнине пĕлтерет. «Азири пĕр халăх та,— тенĕ Синха,—Азири ытти халăхсене хирĕç вăрçас çук».

Парламент депутачĕ генерал-майор Сокхей Малайăри вăрçа тата Корейăпа Вьетнамра халăхсене массăллăн пĕтернине сивленĕ. Вăл Инди правительствине Азире вăрçă ĕçĕсем сарăлассине хирĕç татăклă мерăсем йышăнма сĕннĕ.

«Форвард блок» партин парламентри депутачĕ Баннерджи Инди правительствин политикине сивленĕ. Инди правительстви, тенĕ вăл, Малайя халăхне хирĕç вăрçă вăрçакан Англи çарĕ валли хăйĕн территоринче гуркх çыннисене пухма ирĕк панă. Инди правительстви Америка империализмĕ Индие хирĕç усă курма пултаракан тĕрлĕ йышши информацисем пухса çӳрекен Америкăн нумай эксперчĕсене дипломатсене паракан правăсем панă.

Америкăн агрессиллĕ политикине тата çак политика майлă тăракансене сивленĕ хыççăн, Баннерджи парламент членĕсене миршĕн тăракансен Венăри конгресĕ йышăннă воззвание вуласа панă, парламент членĕсене пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвассишĕн кĕрешме чĕннĕ.

«Свадхината» хаçат Калькутта университечĕн актовăй залĕнче миршĕн тăракансен массăллă митингĕ пулса иртни çинчен пĕлтерет. Митинг йышăннă резолюцире Америка империалисчĕсем Китай Халăх Республики тĕлĕшпе тытса пыракан политикăна сивленĕ. «Инди правительствин,— тенĕ резолюцире, — США тытса пыракан вăрçă политикине хирĕç протестлес пулать».

Бенгалире тухса тăракан «Джугантар» хаçат редакторĕ В. Мукерджи çапла каланă: Америка империалисчĕсем Азирен хăйсен колонийĕ туса хурасшăн. «Халĕ,— тенĕ Мукерджи,— Америка империализмĕ Гитлер, Муссолини тата Тодзио çулĕ çине тăчĕ». Инди правительствин «Америка империалисчĕсем,Ази çинчен алăрсене илĕр», текен лозунгпа Ази çĕршывĕсенчи государствăсен конференцине ирттерес пулать, тесе чĕнсе каланă вăл.

«Свадхината» хаçат Калькутта çыннисен массăллă митингĕ çинчен пĕлтерет. Митинга Коммунистсен партийĕ организациленĕ. Хĕвеланăç Бенгали штачĕнчи законодательнăй пуху депутачĕ Маникунтала Сен çапла каланă: Инди халăхĕ Америка империалисчĕсен Азири агрессиллĕ планĕсене пурнăçа кĕртме парас çук. Митингра пулнисем çак сăмахсене ала çупса йышăннă.

Англире ĕççĕрлĕх ӳссе пырать

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 28-мĕшĕ—мартăн 1-мĕшĕ хушшинче Манчестерта Ланкаширпе Чеширти Коммунистсен партийĕн округри организацийĕн конференцийĕ пулса иртнĕ.

Конференцире округри организаци секретарĕ Эбботт политикăллă доклад туса панă. Вăл вăйланса пыракан экономика кризисĕ Ланкаширпе Чеширти ĕçсене йывăрлатнине, пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем хушшинче ĕççĕрлĕх ӳссе пынине кăтартнă.

Хальхи вăхăтра, профсоюз организацийĕсем пĕлтернĕ тăрăх, пир-авăр промышленноçĕнче 20 пин ытла рабочи эрнере кашни кун ĕçлеймест.

Эбботт çавăн пекех Ливерпульпе Солфордри портсенче 20 пин рабочирен 6 пин рабочи ĕççĕр юлни çинчен пĕлтернĕ.

Япони парламентĕнче

ПАРИЖ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин Токиори корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян Япони парламенчĕ, тĕрĕссипе илсен, премьер-министра Сигеру Иосидăна шанманни çинчен резолюци йышăннă. Парламентăн кĕçĕн палати Иосида бюджет комиссийĕн февралĕн 28-мĕшĕнчи ларăвĕнче хăйне вырăнсăр тыткалани çинчен ытăва дисциплинарнăй комиссире пăхса тухма оппозици панă сĕнĕве 191 сасăпа йышăннă. Хирĕç 162 сасă пулнă.

Парламентăн бюджет комиссийĕн ларăвĕнче тухса каланă чухне Иосида оппозици депутатне кӳрентермелле сăмах каланă. Оппозици çак ытăва дисциплинарнăй комиссие парасси çинчен сасăлама сĕннĕ. Японири политика енĕпе ĕçлекен çынсем çакна кризис патне илсе çитерекен ĕç тесе шутлаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕллехи Х-мĕш спорт вăййи вĕçленнĕ

СССР командин пĕрремĕш вырăн йышăннă

ВЕНА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕллехи Х-мĕш спорт вăййи вĕçленнĕ. Юлашки кун Земмеринґра арçынсем хушшинче слалом меслечĕпе ярăнас тĕлĕшпе ăмăрту пулнă тата трамплин çинчен сикнĕ. Çак ăмăртусене курма Венăран, Винер-Нейштадтран, Сант-Пельтенран тата Австрири ытти хуласенчен Земмеринга 10 пин çын ытла пухăннă. Слалом меслечĕпе ярăнма 11 çĕршыври, вăл шутран: Францири, Италири, Австралири, Финляндири, Австрири, Совет Союзĕнчи, Польшăри, Чехословакири, Демократиллĕ Германи Республикинчи тата ытти çĕршывсенчи вăйлă спортсменсем хутшăннă. Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕллехи Х-мĕш спорт вăййинче спортăн çак вăййи енĕпе Польша спортсменĕ Зарицкий пĕрремĕш вырăн йышăнса чемпион ятне илнĕ. Иккĕмĕш вырăна Рой (Польша), виççĕмĕш вырăна совет спортсменĕ Александр Филатов йышăннă.

Трамплин çинчен сикмелли ăмăрту уйрăмах интереслĕ иртнĕ. Çак енĕпе Совет Союзĕн представителĕ Юрий Скворцов пысăк ăсталăх кăтартнă. Вăл малтанхи хут 63 метр, иккĕмĕшпе виççĕмĕш хут—64,5-шер метр чухлĕ сикнĕ. Судейски коллеги Юрий Скворцова трамплин çинчен сикес енĕпе Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕллехи Х-мĕш спорт вăййин чемпионĕ ятне панă.

Пĕтĕмĕшпе илсен, Совет Союзĕн команди Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕллехи Х-мĕш спорт вăййинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Совет спортсменĕсем ылтăн медальсем 33, кĕмĕл медальсем 15, бронза медальсем 13 илнĕ. Иккĕмĕш вырăнта Чехословаки команди тăрать. Вăл ылтăн медальсем 9, кĕмĕл медальсем 30, бронза медальсем 9 илнĕ. Виççĕмĕш вырăнта—Польша команди, тăваттăмĕш вырăнта—Венгри команди, пиллĕкмĕш вырăнта—Демократиллĕ Германи Республикин команди.

Молотов облаçне куçса килĕр!

Молотов облаçĕнче усă курма пуçламан лайăх çĕрсем питĕ нумай. Ку çĕрсем тырпул акса тума юрăхлă. Облаçри колхозсем тулă, ыраш, сĕлĕ, пĕтĕн, улма, тĕрлĕрен пахча çимĕç туса илеççĕ. Улăхсемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсем анлă.

Эпĕ ку облаçа нумаях пулмасть куçса килтĕм. Манăн çемье вырнаçнă колхоз Андреев юлташ ячĕпе тăрать. Ку колхоз—Фоки районĕнче. Колхоз питĕ пуян. Колхоз ялĕнче электричество, радио пур. Колхозăн хăйĕн 450 гектар вăрман шутланать. 1952 çулта колхоз çĕнĕ вите тунă, колхозниксене çуртсем лартса панă.

Колхозăн пысăк утар пур. Утартан колхоз тупăш нумай илет.

Пире, виçĕ çемьене, кунта çитсенех хатĕр çуртсене вырнаçтарчĕç, тырăпа апат-çимĕçсем пачĕç, вутă хатĕрлеме пулăшрĕç. Вара ытти колхозниксемпе пĕрле ĕçе хутшăнтăмăр.

Пире, Чăваш республикинчен килнĕ колхозниксене, кунта кăмăллăн кĕтсе илчĕç.

Ку облаçе куçса килнĕ колхозниксене пысăк çăмăллăхсем параççĕ. Вырăнтан куçса тухнă хыççăн государство умĕнчи парăмсене каçараççĕ. Куçса килнĕ хыççăн 2 çул хушшинче государство налогĕсем тӳлессине, аш-какайпа сĕт-çу парассине каçарать.

Çавăнпа пĕрлех колхозниксене çурт лартма 7 пин тенкĕ, ĕне илме 1 пин те 500 тенкĕ таран кивçен укçа параççĕ. Икĕ çул хушши колхозниксем вутă хатĕрленĕшĕн, çурт тума йывăç каснăшăн укçа тӳлемеççĕ. Çаксем вĕсем пурте партипе правительство халăхшăн тăрăшнине кăтартаççĕ.

А. МАТВЕЕВ.

Çĕнĕ çĕре куçса каяççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозран 1952 çулта 9 хуçалăх Красноярск крайне куçса кайрĕç. Вĕсем çĕнĕ çĕрте пуян та культурăллă пурăнни çинчен çырса пĕлтереççĕ.

Çак кунсенче ялта К. В. Васильев пулчĕ. Вăл, иртнĕ çулта Красноярск крайне куçса кайнă çын, хăй вырнаçнă колхоз тата 100 хуçалăх йышăнма пултарни, вĕсем валли çĕнĕ çуртсем хатĕрлени çинчен каласа пачĕ.

Ун хыççăн Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозран 2 хуçалăх, Киров ячĕпе тăракан колхозран 9 хуçалăх Красноярск крайне куçса кайма кăмăл турĕç.

К. БОРИСОВ.

* * *

ШĂХАСАН. Çĕнĕ Чалкасси ял Советне кĕрекен «За коммунизм» тата Ильич ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксем Молотов облаçĕнчи вăрман промышленноçĕнче ĕçлеме кăмăл тăваççĕ. Çак кунсенче 7 хуçалăх Молотов облаçне ĕçлеме куçса кайма килĕшнĕ.

Колхозниксене çула кайма çителĕклĕ укçа парса пулăшнă.

И. ПРОКОПЬЕВ.

ШАХМАТИСТСЕНЕ СПОРТ ЗВАНИЙĔ ПАНĂ

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ Бухарестра пулса иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче çĕнтерӳ тунă Александр Толуша (Ленинград) СССР гроссмейстерĕ ятне панă. Александр Толуш—«Зенит» спорт обществин членĕ.

Çак турнирта ăнăçлă выляна чи çамрăк шахматиста — 16 çулхи Борис Спасскине (Ленинград) шахмат спорчĕн мастерĕ ятне панă. Борис Спасский — «Трудовые резервы» общество членĕ.

ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ПУЛТАРУЛĂХ СМОТРĔ

УЛАТĂР. Предприятисемпе учрежденисенче хулари художествăллă пултарулăх коллективĕсен смотрне хатĕрленме пуçланă. Чугун çул работникĕсем те çак смотра хатĕрленеççĕ. Художествăллă пултарулăх коллективĕсене çĕнĕрен хутшăнтарас шутпа чугун çул работникĕсен клубĕн активисчĕсем, клубри кружоксен руководителĕсем хĕрлĕ кĕтессенче, учрежденисемпе предприятисенче калаçусем ирттереççĕ.

Смотра хатĕрленес тĕлĕшпе чугун çул работникĕсен клубĕ пысăк ĕçсем туса ирттерет. Куприянов юлташ ертсе пынипе хор кружокĕ нумай юрăсем юрласа пама хатĕрленет. Депори слесарь Лабуркин тата чугун çул техникумĕнчи Зотов студент тĕрлĕ юрăсем юрласа параççĕ. Клубри драма кружокĕн коллективĕ Луковский çырнă «Тройной узел» пьесăна лартса пама хатĕрленет. Смотра вĕрсе каламалли оркестр та хутшăнать. Вăл совет композиторĕсемпе Сталинла преми лауреачĕсен музыкăллă произведенийĕсене выляса парать.

З. ШАЛАЕВА.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ
Ыран, мартăн 5-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
«ВИÇĔ ТУЙ»
Мартăн 6-мĕшĕнче чăвашла спектакль
«ЯЛТА»
(600-мĕш хут лартаççĕ)
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01024 Типография №1 Чувашполиграфиздата, Тираж 20.000 экз.